К 84.09(=Чув)
Э53
Ч-40111

Валентина Эльпи
Геннадий Пласкин

# Çав кунсен шапĕ çухалмĕ

Чăвашгосиздат-1960

ПРОВЕРЕНО
2016 28 ФЕВ 201

**ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ**

**обозначенного здесь срока**

М т. 3 50 1990 г.т. 5000

ВАЛЕНТИНА ЭЛЬБИ, ГЕННАДИЙ ПЛАСКИН

# ÇАВ КУНСЕН ЧАПĔ ÇУХАЛМĔ

*Тăватă пайлă, прологлă, эпилоглă драма*

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1960

*Пионер Советлă Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе ăна илемлетсе чечеклентерессишĕн çапăçса пуç хунă çынсен ячĕсене чысласа пурăнать.*

*(«Совет Союзĕнчи çамрăк пионерсен законĕсенчен».)*

ДАРСТВЕННЫЙ ЭКЗ.

Ч-40 111

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

## ВЫЛЯКАНСЕМ:

Митюк — 13 çулта

**Елизавета Яковлевна** — унăн амăшĕ.

**Павăл Юркин** — Митюк ашшĕ, 37 çулта.

**Василий Иванович Дубов** — хĕрлисен отрячĕн командирĕ.

**Петя** — Митюк юлташĕ.

**Борис Иванович Широков** — пионерсен аслă вожатăйĕ.

**Çитăр**, **Хĕветле**, **Кĕркури**, **Зоя** — пионерсем

**Сараев** — хĕрлисен связнойĕ, 20 çулта.

**Мотя** — шпионка, чиперскер, пĕр 27 çулалла çитнĕ.

**Шуррисен полковникĕ**, 50 çулсенче.

**Франц** — чех офицерĕ, çамрăк, чиперскер, 28 çулсенче.

**Шуррисен салтакĕ** — часовой.

**Шуррисен салтакĕ.**

**Майралла тăхăннă хĕрарăм.**

**1-мĕш чăваш хĕрарăмĕ.**

**2-мĕш чăваш хĕрарăмĕ.**

Учительсем, пионерсем, хĕрлĕгвардеецсем, шуррисен салтакĕсем.

# ПРОЛОГ

Пионерсен пӳлӗмӗ, Широков пӗччен̆ех ҫырса ларать. Чаршав уҫӑлсан, Ҫитӑр пӳлӗм алӑкне хуллен уҫса пӑхать те каялла хупать. Унтан алӑка шаккани илтӗнет.

Широков. Юрать, юрать, кӗрӗр.

Ҫитӑр, Хӗветле, Зоя тата Кӗркури кӗреҫҫӗ.

Пурте. Здравствуйте, Борис Иванович.

Широков. Здравствуйте.

Ачасем «эп калап» та «эп калап» тесе, тӗрткелеҫҫӗ, пӗрне-пӗри пӳлсех калаҫма пуҫлаҫҫӗ.

Ҫитӑр. Борис Иванович...

Хӗветле. Пӗлетӗр-и, эпир, эпир...

Кӗркури. Борис Иванович, эпир интереслӗ... *(Ана Хӗветле пӳлет.)*

Зоя *(Хӗветлене вӑрттӑн тӗксе)*. Эсӗ шӑпах тӑнӑ пул-ха.

Хӗветле *(Ҫитӑра)*. Эсӗ хӑв шӑплан. Эпӗ, ҫапах та, сирӗн звеньевой. Хам калатӑп.

Ҫитӑр *(Хӗветлене)*. А документне кам тупрӗ? *(Вожатӑя.)* Борис Иванович...

Хӗветле. Пӗр ҫын документ ҫухатнӑ...

Ҫитӑр *(Хӗветлене)*. Каллех ҫӑварна чармастӑн-и?

Кӗркури *(Хӗветлене)*. Юрӗ ӗнтӗ, Ҫитӑрах калатӑр.

Широков *(аптӑраса тӑнӑ хыҫҫӑн)*. Ҫитет сире, шӑпланӑр. Мӗн чакаксем пек чанккатӑр. Мӗн пулнӑ? Пӗрерӗн калӑр. Пуҫла, Ҫитӑр.

Ç и т ă р. Эпир паян хамăр звенопа, килтен-киле çÿресе, икĕ михĕ хут пухрăмăр.

Х ĕ в е т л е *(хăй тĕллĕн)*. Пур çĕрте те унăн малта пулмалла...

Ш и р о к о в. Куншăн сире мухтасси çеç юлать, матур, матур. Пĕлетĕр-и, икĕ михĕре сахалтан та вăтăрхĕрĕх килограмм хут. Çапла-и?

Х ĕ в е т л е. Унтан та ытларах: эпир тăнккасах тултартăмăр.

К ĕ р к у р и. Центнер ытла пулать, Борис Иванович.

Ш и р о к о в *(тĕлĕннĕ пек пулса)*. Ну-у?

Х ĕ в е т л е. Тыттарать вăл, Борис Иванович, ан ĕненĕр ăна. Центнер пуласса пулмасть те, ну, аллă килограмм пулатех.

Ш и р о к о в. Ку та лайăх. Унтан миçе таса тетрадь пулнине пĕлетĕр-и?

К ĕ р к у р и. Сахалтан та пин тетрадь пулать.

Ç и т ă р *(текех тÿссе тăраймасăр, юлташĕсене)*. Çитет сире пустуя палкама. *(Вожатăя.)* Итлĕр-ха, Борис Иванович, çав хутсем хушшинче эпĕ документ тупрăм.

Ш и р о к о в. Мĕнле документ?

Ç и т ă р. Веçех паллă мар çав: хуралса пĕтнĕ. Çавăнпа ăна кама таварса памаллине пĕлместпĕр. Акă мĕнле çырнă унта. Малтанхи сăмахĕсем паллă мар, унтан çапла пуçланать: «...вунвиçĕ çулхи Митюк Ю...» *(пуçне çĕклесе)* кунта каллех хуралнă. Малалла çапла: «... ялĕнчи чăваш ачи 1918 çулта. Тĕрле...» татах паллă мар, «...Хĕрлĕ çар отрядне пысăк... пачĕ Тăван... хÿтĕлес еçе хăюллăн...» *(пуçне çĕклет)* кунта каллех темиçе сăмах паллă мар, унтан акă мĕнле! «...командованийĕ ăна... 1918 çул.

Хĕрлĕ... *(Вожатăя.)* кунта йĕркипех хуралнă, вара... командирĕ В. Дубов»,— тенĕ.

Ш и р о к о в. Чăнах та интереслĕ документ пулмалла ку япала. Пар-ха кунта.

К ĕ р к у р и. Тăхтăр-ха, тăхтăр. Ку документ пирки

ахалех пуҫа ҫавӑрма та кирлӗ мар. Вӑл камӑнне пӗлетӗр-и?

Хӗветле. Пӗлетпӗр пулсан, Борис Ивановича чӑрмантарса ҫӳреместпӗр те ёнтӗ.

Кӗркури. А эпӗ пӗлетӗп.

Ҫитӑр. Пӗлетӗн пулсан, мӗншӗн паҫӑрах каламарӑн?

Кӗркури. Хам та тин ҫеҫ тавҫӑрса илтӗм, эсир Хӗветлепе тавлашнӑ хушӑра.

Хӗветле. Кала эппин часрах. Мӗн хытса тӑратӑн.

Кӗркури. Документра «Ҫар» тесе ҫырнӑ пулсан, унӑн хуҫи тем тесен те ҫар службинче пулнӑ ҫын. Ҫапла-и?

Ҫитӑр. Ку вӑл каламасӑрах паллӑ.

Кӗркури. Эсӗ малалла итле-ха. Пирӗн ҫумри Митюк пичче ёнер кӑна ҫартан курма таврӑнчӗ. Ку хут татӑкӗ тем тесен те ҫавӑн. Нумай шухӑшласа тӑма кирлӗ мар, каймалла та ӑна Митюк пиччене памалла.

Ачасем пӗр-пӗринпе калаҫнӑ хушӑра Широков сӗтелӗнчен лупа илет те тӑрӑшсах ҫав документа тишкӗрет.

Ҫитӑр. Ну, пуҫ та вара санӑн, Кӗркури. Ку документа ҫырнӑ чухне санӑн Митюк пиччӳ ҫуралман та-ха.

Хӗветле. Тӗрӗс. Документра «1918 ҫул» тенӗ, сирӗн кӳршӗри Митюк вӑл ман аппапа пӗр ҫулта кӑна ҫуралнӑ. Тӗрӗсех пӗлессӳ килет пулсан, калам, 1934 ҫулта.

Ҫитӑр. Ку Митюк вара 1918 ҫултах вунвиҫҫӗре пулнӑ.

Широков. Чимӗр-ха, ачасем, лупӑпа пӑхса вуларӑм та, чылаях ӑнланмалла пек пулса тухрӗ.

Ачасем *(харӑсах)*. Ну-у?..

Хӗветле. Вуласа парӑр-ха пире.

Широков. Итлӗр. *(Лупӑпа вулать.)* «...Вунвиҫӗ ҫулхи Митюк Ю... ялӗнчи чӑваш ачи 1918 ҫулта Тӗрлемес... Хӗрлӗ Ҫар отрядне пысӑк пулӑшу пачӗ. Хамӑрӑн юратнӑ ҫамрӑк Тӑван ҫӗршыва тӑшмансенчен хӳтӗлес

ĕçе паттăррăн та хăюллăн хутшăннăшăн... Хĕрлĕ Çар командованийĕ ăна тав тăвать.

1918 çул...

Хĕрлĕ Çар... отрячĕн командирĕ В. Дубов». *(Ачасене.)* Мĕнле, ăнланмалла пек-и?

Ç и т ă р. Пĕтĕмĕшпех ăнланмалла. 1918 çулта Митюк ятлă вунвиçĕ çулхи чăваш ачи Тĕрлемес станцийĕ патĕнче шуррисемпе паттăррăн çапăçнă. Çавăншăн командовани ăна тав тунă.

Х ĕ в е т л е. Эпĕ те çаплах ăнлантăм.

Ш и р о к о в. Акă мĕн, ачасем. Ун чухне шуррисемпе нумай çамрăксем çапăçнă. Вĕсенчен хăшĕсем халĕ те пурăнаççĕ. Тен, çак документ хуçи те чĕрех пулĕ. Ăна тупас пулсан, вăл пире мĕн чухлĕ интереслĕ япаласем çинчен каласа пама пултарĕ. Çапла вĕт?

А ч а с е м. Паллах çапла.

Ш и р о к о в. Мĕнле тупăпăр-ши ăна?

Ç и т ă р. Борис Иванович, эпĕ çапла шутлатăп.

Х ĕ в е т л е *(шӳтлесе)*. Шăпланăр, Чапаев шухăшлать.

Ç и т ă р. Йĕкĕлтесе ан тăр-ха, Хĕветле, мĕнле пысăк ĕç тумалла та, эсĕ çăвар карса тăратăн. Хăвна, çапах та, лайăх звеньевой тесе шутлатăн. *(Вожатăя.)* Ман шутпа, Борис Иванович, чи малтан çак документ пирĕн алла кам патĕнчен лекнине шыраса тупмалла.

Алăка шаккани илтĕнет. Зоя алăк уçма чупать. Вăл часах туя тытнă кинемее, Елизавета Яковлевнăна, пӳлĕме çавăтса кĕрет.

Е л и з а в е т а Я к о в л е в н а. Хут пуçтарса çӳренĕ ачасем те эсир пултăр?

З о я. Эпир, эпир. Ачасем, ял тăрăх хут пухса çӳренĕ чух ку кинемей патĕнче эпир пулнă-и?

Х ĕ в е т л е. Çапла, пулнă.

К ĕ р к у р и. Вара мĕн?

З о я. Ăна кинемейрен хăйĕнчен ыйтса пĕлĕр.

Широков. Кинемей, иртĕр, кунтарах иртĕр. *(Ăна хулĕнчен тытса.)* Акă, ларăр-ха çакăнта.

Елизавета Яковлевна *(ларса)*. Тавтапуç, ачамсем.

Широков. Кинемей, шкул ачисем сирен патра тем ашкăнмарĕç пуль те?

Елизавета Яковлевна. Ачисем вĕсем питĕ сăпайлăскерсем пулчĕç те-ха, анчах мĕн-ха, эпĕ пĕр шутсăр кирлĕ документа çухатрăм та, çавсене парса янă хутсемпе хутшăнса каймарĕ-ши, тетĕп. Хĕрĕх çул арча тĕпĕнче упраса пурăннăччĕ эпĕ ăна.

Широков *(ачасене)*. Эсир, мĕн, шельмăсем, арчасене те тустарса çӳренĕ-и вара?

Елизавета Яковлевна. Вĕсем мĕн-ха, ачам, арчине тустарман-ха. Хам мĕн панисене çеç илчĕç. Анчах ĕнер акă Шупашкартан çакнашкал хут килчĕ те *(саппун кантринчен çакăнса тăракан енчĕкрен хут листи кăларать)*, унта шăпах çав документа ыйтса янă иккен. Эпĕ хам куçлăхсăр курмастăп. Вуласа пăхăр-ха *(хутне вожатая парать)*, чăнах çапла каланă-и?

Широков *(вуланă хыççăн)*. Ан хăра, кинемей. Дубов полковник ыйтса янă документ пирте. Эпир шăпах çавна вуласа ларattăмăр. Анчах мĕнле майпа пирĕн пионерсен аллине лекме пултарнă-ха вăл?

Елизавета Яковлевна. Кăна эпĕ, ачам, хамах айăплă. Ан ятла вĕсене. Ара ĕнер, çак полковник çыравĕ килсен, Шупашкара пуштăпа ярса парас тесе, çав хута арчаран кăлартăм та, ватă пуç мар-и ара, таçта хутам. Шыраман вырăн та хăвармарăм, çук, таçта кайса кĕчĕ, çĕр çăтнă пекех пулчĕ. Апла, пионерсем тупнă пулсан, тавтапуçах вĕсене. Парăр-ха эппин, çав полковник патне ярса парам-ха ăна. Тен, кирлĕ пулĕ вĕсене. Ахалех ыйтмаççĕ ĕнтĕ.

Хĕветле. Кинемей, сиртен ыйтса пĕлме юрать-и?

Елизавета Яковлевна. Мĕн-ши ĕнтĕ, хĕрĕм?

Хĕветле. Кам пулнă вăл Митюк?

Е л и з а в е т а  Я к о в л е в н а *(куçĕсене шăлса)*. Эх, ачамсем, каллех ăна аса илтеретĕр-çке эсир мана.

Ç и т ă р *(васкаса)*. Кинемей, эсир пĕлетĕр-им ăна?

Е л и з а в е т а  Я к о в л е в н а. Мĕнле пĕлем мар хам ывăлăма. Шăпах сирĕн пекчĕ вăл. Ах! çивĕччĕ, чĕрĕччĕ, пĕр вырăнта лара-тăра пĕлместчĕ, шутсăр йӳрĕкчĕ... Яланах хаваслăччĕ, пичĕ-куçĕ хĕвел пек йăлкăшса тăратчĕ.

К ĕ р к у р и. Халĕ ăçта вăл?

Е л и з а в е т а  Я к о в л е в н а. Пурăнма пӳрмерĕ ăна, ачамсем. Ыттисене канлĕ пурнăç туса парассишĕн çамрăклах пуçне хучĕ вăл.

Х ĕ в е т л е. Мĕнле-ха апла?

Ç и т ă р. Хăçан пулнă вара вăл?

Е л и з а в е т а  Я к о в л е в н а. Тахçанах пулнă вăл, ывăлăм, пин те тăхăрçĕр вунсаккăрмĕш çултах. Тĕрлемес станцинче.

Х ĕ в е т л е. Эсир вара унта пурăннă-и?

Е л и з а в е т а  Я к о в л е в н а. Пурăннă, пурăннă, пепкем. Пин те тăхăрçĕр вунçиччĕмĕш çулта влаç хамăр алла куçсанах манăн мăшăр вăрçăран киле таврăнчĕ. «Пуçтар, амăшĕ, япаласене,— терĕ вăл мана,— Тĕрлемес станцине пурăнма куçатпăр». Пирĕн ывăл Митюк савăнса ӳкрĕ, тиха евĕр тапăртатса çеç тăрать. Мĕн тăвас тетĕн, çемье пуçлăхне хĕрарăмăн итлемеллех, йăли çапла, йĕппи ăçталла, çиппи те унталла. Çапла вара, халь хам пĕччеңех пурăнакан килтен, тăван ялтан, тухса кайрăмăр. Хăй чугун çул çинче ĕçлетчĕ. Митюк пĕрмаях унтаччĕ. Сахал çӳренĕ-и вăл ашшĕпе пуйăс çине ларса унталла та кунталла? Йăлтах хăюланса çитрĕ. Тĕрлемес станцинче пурăнса хĕл те каçрăмăр, çăва та тухрăмăр. Чип-чиперех пурăнаттăмăр. Унтан вара... Ах, хальхи пек астăватăп...

Сцена çинче çутă сӳнет.

ЧАРШАВ.

## ПЕРРЕМЕШ ПАЙЕ

Ĕç 1918 çулта пулса иртет.

Елизавета Яковлевна çамрăк. Пысăках мар пӳлĕм. Кантăкран симĕс йывăçсем курăнаççĕ. Пӳлĕмре икĕ алăк: пĕри тулалла, теприпе чăлананалла тухать. Пăравус кăшкăртни илтĕнет. Чаршав уçăлнă чух Елизавета Яковлевна сĕтел çине чашăк-тирĕксем лартать.

Елизавета Яковлевна. Ăçта çӳрет паян ку Митюк? Апат çимелле. Çăмах йăлтах ирĕлсе кайрĕ. *(Кантăк патне пырса пăхать.)* И-и, хĕвелĕ ăçта çитнĕ. Ашшĕ те паян тем тытăнса тăрать. *(Кăмака умне пырса яшкине пăхать. Çак вăхăтра уçă чӳречерен аякра икĕ ача «Пĕчĕк параппанçă» юрра юрлани илтĕнет. Ăна Митюкпа Петя юрлаççĕ.)*

Пыраттăмăр вут-çулăм витĕр —
Эпир вилĕмрен хăраман...
Малтан малалла ыткăнатчĕç
Тăшмансемпеле çапăçма.

*(Елизавета Яковлевна татах чӳрече патне пырса пăхать).*

Елизавета Яковлевна. Эй, чим. Ара Митюк пулас ку. Алай, çав, çав. Пуçне шлем тăхăннă темле палламан ачапа ута-ута юрлаççĕ. Салтаксем пекех. Ха-ха, урисене епле çĕклеççĕ. Э-э-й *(кулса)*, хăйсене кам вырăнне хураççĕ-ши? Мур илесшĕ Митюкне, кампа кăна паллашмасть пулĕ. Ку ачана нихçан та курман эпĕ. *(Кăшкăрать.)* Митюк! Митюк! Киле, киле таврăн! Апат çимелле!

Аякран Митюк сасси илтĕнет: «Халех, анне!» Унтан Митюк киле чупса кĕрет. Ун çийĕнче улача кĕпе.

Митюк. Анне, мĕн пĕçертĕн?

Елизавета Яковлевна. Çăмах. Çăкри çук ĕнтĕ, ачам.

*Митюк амăшне аллинчен тытса ачашласа илет те, сĕтел хушшине кĕрсе, сĕтел çинче мĕн пуррине пăхать.*

Митюк. Хăй çăмах пĕçернĕ, тет. Уйран ăçта?

Елизавета Яковлевна. И-и, мансах кайнă уйран лартма. Уйранĕ нӳхрепрех. Ывăлăм, пыр-ха, анса ил. Қăкшăмпа ларать.

Митюк. Халех, анне.

*Митюк «Пĕчĕк параппанçă» юрă кĕввине ĕнерлесе тухса каять.*

Елизавета Яковлевна. Митюк, асту, чипертерех пул! Уйранне тăкса ан яр.

Митюк *(сцена хыçĕнче кăшкăрать)*. Юрать!

*Кăшт тăхтасан Павăл кĕрет. Хăй питĕ пăшăрханнă тĕслĕ. Пӳрте кĕрсен тӳрех хăйĕн пĕчĕк арчине пукан çине çĕклесе лартать. Унтан хутсем — документсем илсе кĕсйине чикет.*

Елизавета Яковлевна. Павăл, мĕн вăрах килмерĕн эсĕ паян? Çăмах ирĕлсех кайрĕ. Чим, мĕн эсĕ пит пăшăрханнă тĕслĕ? Арчуна ан пăтраштар-ха эсĕ, апат çи.

Павăл. Ах, амăшĕ, апат çиес шухăш мар-ха кунта.

Елизавета Яковлевна *(аллинчи çăпалапах пĕр вырăнта хытса тăрать)*. Тем инкек таврашĕ пулман пулĕ те?

Павăл. Пулнă çав, пулнă. Шуррисем Хусана йышăннă. Чугун çулпа кунталла, Тĕрлемес еннелле, килеççĕ.

Елизавета Яковлевна. Ах, турăçăм! Мĕн тăвăпăр ĕнтĕ апла, Павăл?

Павăл. Хĕрлĕ Çар отрячĕ йĕркелеççĕ. Эпĕ те, Лизук, çавăнта çырăнтăм. Эсĕ мĕнле шухăшлатăн?

Елизавета Яковлевна. Эпĕ тăруках ним калама та пĕлмерĕм-ха. Қаясах тетни вара?

Павăл. Қаяс пулать. Аçта-ха сан сухари?

Елизавета Яковлевна *(чăлантан сухари тултарнă хутаç илсе кĕрет)*. Сухарийĕ кунтах-ха вăл. Ах,

Павăл, эсё кайăн ёнте, эпир Митюкпа иксёмёр мёнле пурăнăпăр, ăçта кайса кёрёпёр?

П а в ă л. Ытла хыпăнса ан ӳк-ха, Лизук.

Е л и з а в е т а Я к о в л е в н а. Çук, çук, Павăл, эпир те санран юлмастпăр. Пире тăшман аллине пăрахса ан хăвар. Эпир те пыратпăр. Эпё те усăллă пулăп унта.

П а в ă л. Ку тёрёс, ёçре пултаруллă, çирёп чунлă çын эсё. Анчах Митюк вăрçă хирёнче мён тăвё?

Е л и з а в е т а Я к о в л е в н а. Эппин ăна халех яла яратăп та хам сирёнпе пыратăп, манăн та çакăн пек вăхăтра килте ларма чăтăм çитес çук. Больницăра ёçленё эпё, сурана мёнле çыхмаллине пёлетёп. Вăхăта сая ярас мар, станцие чупам-ха. Лекçей мучи станцие çăмарта сутма килнё. Митюка çавăнпа пёрле яла яратăп. Вăхăтлăха кукамăшёпе пурăнё.

П а в ă л. Унта тесен хуть, юрать. Кукамăшё Митюк тесен вилсех каять. *(Çак вăхăтра Митюк тултан юрă юрласа кёрет. Аллинче кăкшăм.)*

М и т ю к. Ме, анне. *(Амăшне кăкшăм тыттарать. Унтан ашшёне курать те кăшкăрса ярать, ун мăйёнчен пырса уртăнать.)* Атте! Атте, пёлетне? Эпё çёнё юрă юрлама вёрентём.

П а в ă л. Юрла-ха эппин, итлем.

М и т ю к. Халех. *(Юсанса тăрать, вара пётём сасăпа «Пёчёк параппанçă» юрра юрлать):*

> Пыраттăмăр вут-çулăм витёр —
> Эпир вилёмрен хăраман.
> Малтан малалла ыткăнатчёç
> Тăшмансемпеле çапăçма.

М и т ю к. Ну, мёнле, атте, юрă килёшрё-и?

П а в ă л. Селём юрă, чăнах та. Кам вёрентрё-ха ăна сана?

М и т ю к. Эпё вырăс ачипе — Петьăпа паллашрăм. Вăл вёрентрё. Эх, лайăх ача та вăл. Атте, пёлетён-и, ун пемелли наган пур. *(Амăшё йёрсе ярать.)* Анне, мён пулнă сана? *(Амăшё патне чупса пырать.)*

Е л и з а в е т а  Я к о в л е в н а. Ах, ывăлăм, пирĕн пата вăрçă çывхарать. Шуррисем Тĕрлемес еннелле килеççĕ, тет. Аçу, ав, хĕрлисен отрядне каять.

М и т ю к *(ăна хăрушă хыпар ним чухлĕ те хурлантармасть. Куçĕ чеен йăлтăртатса илет. Çакăнпа вăл, пĕчĕккĕ пулин те, шуррисене хирĕç çапăçма хатĕр тăнине кăтартса парать)*. Анне, эсĕ ан йĕр.

Е л и з а в е т а  Я к о в л е в н а. Митюк ывăлăм, санăн яла каяс пулать. Кукамусем патĕнче пурăнăн.

М и т ю к. Эсĕ ху?

Е л и з а в е т а  Я к о в л е в н а. Аçу Хĕрлĕ Çар отрядне çырăннă. Эпĕ унпа каятăп.

М и т ю к. Ай-ай чее. Хăй аттепе, манăн — яла кай. Люк, каймастăп!

Е л и з а в е т а  Я к о в л е в н а. Мĕнле каймастăн? Кунта тупăсем пеме тытăнсан, сехрӳ хăпĕ. Халех Лекçей мучине чĕнсе килетĕп. Унпа яла каятăн. Пуçтарăнкала. Павăл, эсир кантурта пулатăр-и?

П а в ă л. Кантурта. Пирĕн добровольцсем çавăнта пухăнаççĕ. Эпĕ сана унта кĕтетĕп.

Елизавета Яковлевна тухса каять. Ашшĕ кутамкка çыхса çурăм хыçне çакать.

П а в ă л. Ну вăт, хатĕр. Митюк ывăлăм, кил-ха ман пата. *(Митюк пырать. Ашшĕ аллине Митюк хулпуççийĕ çине хурать.)* Митюк, аннӳ каланине илтрĕн-и?

М и т ю к *(хурлăхлăн)*. Илтрĕм. Каймастăп эпĕ яла!

П а в ă л. Апла юрамасть, каланине итлес пулать. Хăрушă кунсем çитрĕç. Тăшмансем пирĕн Ленин панă ырă пурнăçа таптаса тăкасшăн. Ирĕке тухнă хура халăха каллех пусмăр айне чикесшĕн. Эпир аннӳпе Хĕрлĕ Çар отрядне каятпăр. Хамăр юратнă совет влаçне, ывăлăм, хӳтĕлемелле. Часах çĕнтерĕпĕр. Вара каллех эсĕ Тĕрлемесе таврăнăн.

М и т ю к. Анне те санпа пырать-и?

П а в ă л. Мĕн тăвас тетĕн? Аннӳ пире питĕ кирлĕ. Вăл салтаксен суранне çыхса ярĕ.

Митюк. Атте, эпĕ те пырап сирĕнпе.

Павăл *(ашшĕ ывăлне хăтăрса пăрахать)*. Ан ухмахлан. Вăрçăра пĕчĕккисем юрăхсăр, вăрçă вăл ача вăййи выляни мар. Ну, эпĕ каятăп. Аннӳне итле. Вăл халех Лекçей мучие чĕнсе килет. Кукамуна салам кала. *(Ыталаса чуптăвать.)* Ну, ну, пуçна ан ус.

Павăл тухса каять. Митюк пĕчченех тăрса юлать.

Митюк *(ашшĕ хыççăн кăшкăрса алăк патне чупса пырать)*. Атте! *(Унтан каялла таврăнать.)* Шуррисем Тĕрлемес еннелле килнине эпĕ аттерен те малтан илтнĕ. Мана Петя пĕтĕмпех каларĕ. Эпир Петяпа яланах пĕрле пулма калаçса татăлнăччĕ. Ых! Халь Лекçей мучи хыççăн яла ут ĕнтĕ. Мĕн тăвас? Яла яраççĕ. Петя мĕн калĕ-ши? *(Чӳрече патне пырса пăхать те урамра шăпах Петьăна курать.)* Петя! Петя! Кил-ха кунтарах! *(Петя чӳрече умне пырса тăрать.)*

Петя. Килте кам пур?

Митюк. Никам та çук. Часрах!

Петя *(чӳречерен сиксе кĕрет)*. Килтисем ăçта вара сирĕн?

Митюк. Атте Хĕрлĕ Çар отрядне кайрĕ.

Петя. Хĕрлĕ Çар отрядне?

Митюк. Çапла. Мана Лекçей мучипе яла кайма хушрĕç. Анне халĕ ăна чĕнме станцие кайрĕ. Мĕн тăвас?

Петя. Ак сана кача майраки! Лекрĕн вĕт, э? Ман ăçта каяс вара сансăр?

Митюк. Атя, анне киличчен тухса таратпăр.

Петя. Атя! Пĕлетне ăçта?

Митюк. Аçта?

Петя. Тăшмансемпе çапăçма каятпăр.

Митюк. Вăрçа-и? Ой-ой!

Петя. Вăрçа çав. Хăраса ӳкрĕн-и?

Митюк. Мана яла яраççĕ-çке.

Петя. Ниушлĕ яла каясах тетĕн?

Митюк. Атте ятлать-çке.

П е т я. Эх, мĕн тума эпĕ санпа паллашрăм. Итле-ха, эсĕ яла кайма хĕрача-и? Шăлавар тăхăнса çӳрекен кирек епле арçын та халĕ шуррисене хирĕç çапăçма Хĕрлĕ Çар отрядне каять.

М и т ю к. Çапла та...

П е т я. «Çапла та» тесе тăрать тата. Эх, каçăр сăмса. Арçын-и эсĕ е çук? Эпĕ халех сана пăрахса каятăп. *(Чӳречерен сикме тăрать.)*

М и т ю к *(Петьăна тытса чарать)*. Тăхта-ха, Петя!

П е т я. Ну, мĕн?

М и т ю к. Паллах, эпĕ арçын. Санпа пыратăп.

П е т я. Тот-тă.

Çак вăхăтра алкумĕнче ура сасси илтĕнет. Иккĕшĕ те ăçта килчĕ унта пытанаççĕ. Никам та çуккине пĕлсен, тухаççĕ.

П е т я. Митюк, атя тӳрех хĕрлисен командирĕ патне каятпăр.

Митюк унтан-кунтан кĕпе-йĕмсем пухать. Хăшне-пĕрне Петяна парать. Иккĕшĕ те кĕписене хĕвне чикеççĕ. Çак вăхăтра алкумĕнче амăш сасси илтĕнет: «Васкамалла, васкамалла... Лексей мучи, тăхта, эпĕ халех Митюка илсе тухатăп!»

М и т ю к. Анне килет! Хăвăртрах чӳречерен чăмар!

П е т я. Хăвăртрах.

Петяпа Митюк чӳречерен сикеççĕ. Елизавета Яковлевна кĕрет. Аякра тупă пени илтĕнет.

Е л и з а в е т а Я к о в л е в н а. Ах, шуррисем çывхарсах çитеççĕ пулас. Митюк! Ачам, пуçтарăн часрах. Тем курса тăрăпăр. Митюк! Ăçта эсĕ? *(Чăлан алăкне уçса пăхать.)* Митюк! Ăçта эсĕ? Пытанса шӳтлеме вăхăт мар. *(Шырать, ниçта та тупаймасть.)* Митюк, тух часрах. Лексей мучи васкать, вăл картишĕнче кĕтсе тăрать сана. Ах, ку ача-пăчапа. Ашшĕ хыççăн тухса чупмарĕ пуль те...

Тупă сасси вирлĕнех илтĕнет. Елизавета Яковлевна пӳртрен кăшкăрса тухса каять.

Митюк! Митюк!

ЧАРШАВ.

## ИККЕМЕШ ПАЙЕ

Сцена варринче Дубов командиран сăнамалли вырăнĕ — НП. Кунтах тĕмĕн-тĕмĕн пĕчĕк йывăçсем ÿсеççĕ. НП-на вырнаçнă Дубов кĕске сăмсаллă картузпа, кительпе, галифепе, атăпа. Мăйĕнчен — бинокль, пиçиххинчен карабин çакнă. Дубовпа юнашар — унăн связнойĕ Сараев, винтовкăллă çамрăк боец. Çанталăк, кĕр енне кайнă пулин те, пăчă.

Д у б о в *(биноклЬпе пăхса)*. Горизонтра пĕр чĕрчун та курăнмасть. Хĕрÿллĕ çапăçу хыççăн пĕтĕм тĕнче шăпланчĕ. Пурте канаççĕ пулмалла. *(БиноклЬне илсе.)* Хамăра та аван тиврĕ те, вĕсене вара тата вирлĕрех лекрĕ. *(Айккинелле пăхса.)* Ĕшенчĕç боецсем. Тĕлĕреççĕ...

С а р а е в. Виççĕмĕш талăк çывăрмастпăр вĕт, командир юлташ.

Д у б о в. Çапла, виççĕмĕш талăк.

С а р а е в. Эсир, акă, ку эрнере пачах çывăрман тесен те юрать. Мĕнле тÿсетĕр, командир юлташ?

Д у б о в. Эпĕ, эпĕ вăл нимех те мар, боецсене шел. Куратăн-и, тăнă çĕртех çывăраççĕ авă. Итле-ха, Сараев, эсĕ утса пынă çĕрте çывăрса курнă-и?

С а р а е в. Командир юлташ, утнă çĕрте те çывăрма пулать-и?

Д у б о в *(Сараева лăпкаса)*. Эх, тăванăм, çамрăк çавха эсĕ, сахал курнă. Салтак нушине нумай курмалла ан пултăр сана. Манăн пурнăçра утнă çĕртех çывăрнисем нумай пулнă. Пĕр çын çеç мар, пĕтĕм отделени, взвод, рота, батальон çывăрать. Виç-тăват талăк ним канмасăр çапăçнă хыççăн ир кÿлĕм пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçмалла пулсан — утса пынă çĕрте пĕтĕм строй çывăрать.

Хăшпĕрисем, стройран тухса кайса, çирĕм-вăтăр утăм айккинелле утаççĕ, пĕр-пĕр ланкашкана ярса пуссан тин вăранса каяççĕ. *(Сассине улăштарса.)* Ну, мĕнле, вăйлă лекрĕ вĕт вĕсене паян, а?

С а р а е в. Вĕри çатма çинчи пăрçа пекех ăшаланчĕç.

Д у б о в. Хамăр та нумай çухатрăмăр, анчах позицие сыхласа хăвартăмăр-хăвартăмăрах. Матур, пултараççĕ пирĕн боецсем. Вĕсемпе çапăçма пулать. Фу! Епле пăчă паян.

С а р а е в. Çакнашкал çанталăкра сулхăнта хĕрпе ларма аван пулмалла та...

Д у б о в *(ăна тĕрткелесе)*. Пĕр-пĕр хĕре юратса пăрахмарăн пулĕ те?

С а р а е в *(кулкаласа)*. Çамрăк чухне вăл та пулĕ.

Д у б о в. Ах, ĕçес килнипе пыр типрĕ.

Йывăç туратĕнчен çакăнса тăракан флягине вĕçертсе илсе ĕçме тăрать, анчах унта шыв çук иккен, ирĕксĕрех флягине çĕре пăрахать,

Сараев, атя пĕреххут туртса ярар.

Дубов тунката çине ларать, Сараев ун çумне вырнаçать, чикаркă чĕркесе туртма тытăнаççĕ. Çак вăхăтра вĕсен хыçĕнче Митюкпа Петя курăнса каяççĕ.

М и т ю к. Илтрĕн-и, Петя? Командир шыв ĕçес килет, тет.

П е т я. Илтрĕм. Шыв ăçта пур-ши?

М и т ю к. Акă, кунта, çывăхрах, тарăн вар çырминче выртса ĕçрĕмĕр-çке. Вĕçтер шыв ăсма. Командир патне пушă алăпа пыма аван мар.

П е т я. Мĕнпе ăсса килес-ха? *(Çĕр çинче выртакан флягăна курать.)* Чим, Митюк! Авă, унта вĕсен фляги выртать.

Вăл вăрттăн упаленсе пырса флягăна илет те каялла шăвăнса тухать. Дубовпа Сараев ура çине сиксе тăраççĕ.

Д у б о в. Атя-ха окопа, боецсене кайса тĕрĕслер.

Дубов маларах тухса каять.

С а р а е в *(ун-кун пăхкаласа)*. Паян кунта манăн Мотя килме пулнăччĕ те...



НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
ч-40111

Дубов хыççăн тухса каять. Қăшт тăхтасан Митюкпа Петя шуса тухаççĕ. Ура çине тăрса сцена варринелле утаççĕ. Унччен те пулмасть. Митюк хăвăрт каялла чакать. Тунката хыçне пытанса выртать. Петьăна та хăйпе юнашар вырттарать.

М и т ю к. Ой, атте килет!

П е т я. Митюк, мĕн пулчĕ сана?

М и т ю к. Юрамасть. *(Петя пуçне аллипе пĕкет.)*

П е т я *(ним ăнланманнипе пуçне каллех çĕклет)*. Мĕншĕн юрамасть?

М и т ю к. Халлĕхе юрамасть.

П е т я. Мĕншĕн?

М и т ю к. Мĕншĕн, мĕншĕн? Чик пуçна!

Чылайччен çапла аппаланнă хыççăн ачасем пытанаççĕ. Сцена çине пысăк утăмсемпе утса Павăл тухать. Вăл хулпуççисем урлă хĕреслетсе пулемет ленти çакнă. Тепĕр енчен Сараев тухать.

С а р а е в *(наганĕпе тĕллесе)*. Қам килет?

П а в ă л. Итлĕр-ха, юлташ, Дубов командира ăçта курма пулать?

Сараев хыççăнах Дубов та тухать.

Д у б о в. Эпĕ пулатăп Дубов.

П а в ă л *(хăвăрт Дубов умне пырса тăрать)*. Мана, командир юлташ, сирĕн распоряженине ячĕç.

Д у б о в. Пĕчченех-и?

П а в ă л. Пĕччен мар. Манпа пĕрле вăтăр сакăр çын. Пурте шуррисене хирĕç çапăçма хăйсен ирĕкĕпе çырăннă железнодорожниксем.

Д у б о в. Мĕнпе хĕçпăшалланнă?

П а в ă л. Қашниййĕнех пăшал, çĕршер патрон тата пĕр пулемет. Пулеметчикĕ — эпĕ хам.

Д у б о в. Питĕ лайăх. Шăпах вăхăтра çитрĕр. *(Аллипе кăтартса.)* Авă, çулăн сылтăм енĕпе каякан окопа куратăр-и?

П а в ă л. Питĕ лайăх куратăп.

Д у б о в. Хальччен çарта пулнă-и?

П а в ă л. Пулнă. Икĕ çул анаçри фронтра çапăçнă. Вунçиччĕмĕш çулта Зимний двореца штурмланă.

Дубов. Апла эсир çапăçура пиçнĕ çын. Хушаматăр мĕнле?

Павăл. Юркин. Павăл тесе чĕнеççĕ.

Дубов. Ну вăт, Юркин юлташ, хăвăн доброволецусемпе çул леш енчи окопăн сылтăм флангне йышăнатăн. Пулеметне чи вĕçне ларт. Унта тăшмансем вĕтлĕхрен персе тухас хăрушлăх пур. Ăнлантăн-и?

Павăл. Пĕтĕмпех ăнлантăм. Кайма юрать-и?

Дубов. Кайăр. Майлаштарса пĕтерсен, килсе каласа парăр.

Павăл. Итлетĕп, командир юлташ. *(Каять.)*

Дубов *(ун хыççăн пăхса)*. Начар мар салтак. *(Сараева.)* Эсĕ халех окопсем тăрăх кай. Кашни командирах асăрхаттар: яланах хатĕр пулччăр.

Сараев. Итлетĕп. Кайма юрать-и?

Дубов. Кай. *(Бинокльпе малалла пăхать.)* Хальхинче тата тĕплĕнрех хатĕрленеççĕ пулмалла. Çанталăкĕ тата тӳсмелле мар пăчă. Эх, çакăнта сивĕ шыв ĕçсе ярасчĕ.

Петьăпа Митюк упаленсе пырса Дубов хыçнех çитеççĕ. Иккĕшĕ тавлашаççĕ. Çакна илтсе Дубов ялт! çаврăнса пăхать.

Петя. Командир юлташ...

Дубов. Камсем эсир?!

Петя. Кусем эпир, командир юлташ.

Дубов. Камсем?

Митюк. Çанталăк питĕ шăрăх та, сире валли сивĕ шыв илсе килес терĕмĕр.

Дубов. Ăçтан?

Петя. Тарăн вар çырминчен. Командир юлташ, унта питĕ лайăх çăл пур, шывĕ сип-сивĕ.

Митюк. Юриех сирĕн валли илсе килтĕмĕр. Ĕçесси килет пуль, терĕмĕр.

Дубов. Çапах та, камсем-ха эсир?

Петя. Эсир ĕçĕр-ха. Сирĕн питĕ ĕçес килет, çапла-и?

Дубов. Сире шуррисем мана ёҫтерме наркӑмӑшлӑ шыв парса ямарӗҫ-и?

Митюк. Мӗн эсир, командир юлташ. Ёненместӗр пулсан, хам ӗҫсе кӑтартам. *(Петя аллинчен флягӑна илет те ӗҫме пуҫлать.)*

Петя. Эсӗ, Митюк, нумай ан ӗҫ. *(Петя флягине тытса илесшӗн.)*

Митюк. Ара, ӗненмеҫҫӗ те... Ан хӑрӑр, командир юлташ, эпир хамӑрӑннисем.

Дубов. Ну, пар-ха эппин.

Митюк. Тархасшӑн. *(Дубов флягӑри шыва ӗҫет.)* Лайӑх шыв вӗт, командир юлташ?

Дубов *(ӗҫсе тӑрансан)*. Питӗ лайӑх. Тавтапуҫ сире, чуна уҫӑлтарсах ячӗ. Эпӗ веҫех ӗҫсе ятӑм пулас, хӑвӑра валли хӑвармарӑм та.

Петя. Эпир лере, ҫӑл патӗнче, тӑраничченех ӗҫрӗмӗр.

Дубов. Чим, эсир ку флягӑна ӑҫтан илтӗр? *(Ачасем пуҫне усаҫҫӗ.)* Ну, чеескерсем. Ҫапах та, мӗн туса ҫӳретӗр-ха эсир кунта?

Петя. Эпир, командир юлташ, шуррисемпе ҫапӑҫасшӑн, Хӗрлӗ Ҫара пулӑшасшӑн.

Дубов *(кулса)*. Авӑ мӗнле иккен... Халиччен мӗнле-мӗнле фронтсенче ҫапӑҫнӑ-ха эсир?

Митюк. Командир юлташ, эпир пӗрре те кулса мар.

Петя. Ёненместӗр пулсан, эпӗ винтовкӑран та, пистолетран та пеме пӗлетӗп.

Дубов *(ҫаплах кулса)*. Пӑх-ха эсӗ ӑна.

Петя. Кулатӑр пулсан *(хӗвӗнчен пистолет туртса кӑларать)*, персе кӑтартам-и?

Дубов *(чӑннипех тӗлӗнсе)*. Кӑна ӑҫтан тупнӑ эсӗ?

Дубов, Петя аллинчи наганне тытса илес тесе, аллине тӑсрӗ, анчах та лешӗ айккинелле пӑрӑнса тӑчӗ.

Петя. Пӗлессӗр килсен, манӑн атте те сирӗн пекех хӗрлӗ командир. Шел, тупаймарӑм-ха эпӗ ӑна.

Митюк. Чӑнах ҫапла, командир юлташ. Пӑшалпа эпӗ те пеме пӗлетӗп.

Дубов (*Петьăна*). Апла, аçу хĕрлĕ командир тетĕн?

Петя. Çапла. Вăл революцичченех большевиксен партинче тăрать.

Дубов. Авă епле. Хушамачĕ мĕнле-ха унăн?

Петя. Революциччен унăн, жандармсенчен пытанма лайăх пултăр тесе, темиçе тĕрлĕ хушамат та пулнă. Чăн хушамат пирĕн — Краснов.

Дубов. Так, так. Краснов... Аçтан пулатăн-ха эсĕ?

Митюк. Хусантан вăл, командир юлташ, вырăс ачи.

Петя. Аха. Вырăс ачи.

Дубов. Апла кунта мĕнле майпа лекме пултарнă эсĕ, а?

Петя. Шуррисем Хусана илсен, хĕрлисем Шăхран еннелле чакнине эпĕ аван пĕлнĕ. Атте хăй каласа хăварчĕ. Эпĕ аттепе пĕрле каясшăнччĕ, илмерĕ. Вара пĕчченех хĕрлисем патне каçма шутларăм. Унта каçсан, вăл мана пĕрех хăйĕнчен хăвармасть, терĕм.

Дубов. Фронт линийĕ урлă мĕнле каçма пултарнă-ха эсĕ?

Петя. Вăл, командир юлташ, йывăр япалах мар.

Дубов. Мĕнле йывăр мар?

Петя. Çаплах. Эпĕ шуррисен пысăк офицерĕн хушаматне лайăх пĕлетĕп. Ну вăт, йĕркеллĕ тумлантăм та, станцине вĕçтертĕм. Ку çи-пуçа мана, акă, Митюк пачĕ. Апла-капла сиксе тухсан — ыйткалакансем эпир. Ну вăт, станцинче шăпах кунталла килекен эшелон тăрать. Пĕр вакунне кĕтĕм те лартăм. «Эй, ача, ăçта каян эсĕ?», теççĕ мана. «Атте патне», тетĕп. «Кам вара сан аçу?», теççĕ. «Вăл сирĕн ĕç мар, ăçта сирĕн командир?», тетĕп çаксене. «Е эсир хăвăрăн аслă офицерăра та пĕлместĕр-и?», тесе ятлатăп хайхисене. Çав хушăра эшелон хускалса кайрĕ, вара пĕр чарăнмасăрах фронт линийĕ патне çитрĕ. Çĕрле эпĕ ку енне, хамăрăннисем патне шăвăнса каçрăм, Митюкпа паллашрăм. Унăн та ашшĕ çакăнтах пулмалла.

Дубов. Шуррисен эшелонĕ çинче мĕн-мĕн пурччĕ?

Петя. Сакăр тупă, ыттисем веçех салтаксем. Анчах

эшелонĕ пысăк мар. Унта пурĕ те вунпилĕк вакун çеçчĕ.

Дубов. Матур (*Митюка.*) Эсĕ тата кам?

Митюк. Эпĕ кунтисем, Тĕрлемесренех.

Дубов. Апла пулсан, акă мĕн, ачамсем. (*Ачасем иккĕшĕ те ĕç хушасса шанса тӳрленсе тăраççĕ.*) Халех, пĕр минут тăхтаса тăмасăрах...

Ачасем. Эпир халех!

Дубов. Пĕр минут тăхтаса тăмасăр Тĕрлемесе, Митюксем патне кайăр.

Ачасем. Ой-ой!

Митюк. Эпир каялла таврăнмалла килмен кунта, çапăçма килнĕ.

Дубов. Илтрĕн-и, Краснов?

Петя. Илтрĕм, анчах...

Дубов (*татăклăн*). Нимĕнле «анчах» та! Халех марш!

Митюк. Командир юлташ...

Дубов. Командир икĕ хут каламасть, ну!

Петяпа Митюк ирĕксĕрех чакаççĕ.

Дубов. Çапах та, маттур ачасем...

Ачасем (*каллех каялла сиксе тухаççĕ*). Э-э?

Дубов. Марш! Марш! (*Ачасем тухса каяççĕ.*)

Павăл чупса килсе тӳрех Дубов патне НП-на сикет.

Павăл. Командир юлташ, эсир хушнипе эпĕ килсе çитрĕм. Мĕн каланине пурнăçларăм. Пулемета чи вĕçне вырнаçтартăм, тăшман курмалла мар витсе хăвартăм.

Дубов. Юрать, лайăх. (*Бинокльпе пăхса илет. Кукленсе ларать.*) Апла, сирĕн боецсем пурте чугун çул çинче ĕçлекенсем, тетĕр?

Павăл (*тӳп-тӳрĕ тăрса*). Çапла, командир юлташ.

Дубов. Пĕшкĕнерех ларăр.

Павăл. Айăплă. (*Тепĕр хут кукленсе ларать.*)

Дубов. Пурне те пĕлетĕр-и вĕсене?

Павăл. Пурне тесен те юрать. Пĕр çул çинче ĕçленĕ. Хусанпа Шăхран хушшине пуйăссем çӳреме чарăн-

чĕç те, мĕн тăвас, çакăн пек хĕрӳллĕ вăхăтра килте лармалла мар-çке. Атьăр, хамăр ирĕкпех Хĕрлĕ Çар ретне тăрас, тăшмана хăвăртрах хăваласа ярас та, часрах пуйăссене çӳретме тытăнас, терĕмĕр.

Д у б о в. Тĕрĕс тунă, Юркин юлташ. Акă мĕншĕн чĕнтĕм эпĕ сире. Ытти командирсем пурте задани илнĕ, хăçан мĕн тумаллине пĕлеççĕ. Тăшман хăйĕн умне питех те пысăк тĕллев лартнă. Вăл, Хусана илнĕ хыççăн, эпир сыхлакан чугун çулĕ тăрăх пырса, Мускава çитесшĕн. Вĕсен çывăх тĕллевĕ—Шăхрана çитсе ӳкесси. Унта вĕсем Патăръел енчен килекен шуррисемпе пĕрлешмелле. Пирĕн задача — пулăшу килсе çитиччен хуть те мĕнле пулсан та çак рубежа хамăр алăра тытса тăмалла. Ăнланмалла-и?

П а в ă л. Питĕ лайăх ăнланмалла, командир юлташ. Вилетпĕр, анчах каялла пĕр утăм та чакмастпăр. Қайма юрать-и? *(Сараев чупса килет.)*

С а р а е в. Қомандир юлташ, шуррисем халех наступлени пуçлаççĕ.

Д у б о в( *Павăла)*. Вĕçтерĕр, Юркин юлташ, çирĕп тăрăр!

П а в ă л. Пирĕншĕн ан шикленĕр! *(Тăрса чупать.)*

Д у б о в *(биноклька пăхса илнĕ хыççăн)*. Батальон, приготовиться к бою! *(Аякра ытти командирсем: «Рота, приготовиться к бою!» «Взвод, приготовиться к бою!» «Отделение, приготовиться к бою!» тесе команда пани илтĕнет. Дубов карабинне аллине тытать, унтан каллех биноклька пăхать.)* Хитре килеççĕ. Анчах тĕлĕнмелле, мĕншĕн тупăран пемеççĕ-ха вĕсем? Акă, çывхарсах килеççĕ. *(Связноя.)* Ну, тусăм, текех яма юрамасть вĕсене. Внимание, батальон, пли! *(Аякра: «Рота, пли!» «Взвод, пли! «Отделение, пли!» тенĕ командăсем янраса каяççĕ. Винтовкăсемпе пулеметсенчен пени, суранланнисем йынăшни илтĕнсе тăрать.)*

П а в ă л *(йĕп-йĕпе тарланăскер, Дубов патне чупса пырать)*. Командир юлташ, эпир сыхланма çеç мар, та-

пăнма та пултаратпăр. Вĕсенчен мĕн юлнине куратăр-и?

Дубов. Сирĕн мĕнле унта?

Павăл. Иккĕ вилнĕ, пиллĕкĕш суранланнă. Железнодорожниксем окопран тухса хăйсем тапăнасшăн. Ирĕк паратăр-и?

Дубов. Пĕри çĕкленсен — пурин те çĕкленмелле. Вырăнăра кайăр, ман командăна итлĕр.

Павăл. Итлетĕп! *(Çаплах перкелешни илтĕнет.)*

Дубов. Батальон, за нашу Советскую Родину, за Ленина, вперед! Ур-р-р-а! *(Боецсем урра кăшкăрса малалла кайни илтĕнет. Дубовпа Сараев та тăрса чупаççĕ.)*

Дубов командăсем панă, Павăлпа калаçнă хушăра Митюкпа Петя тĕм хыçĕнчен пуçĕсене кăларса пăхаççĕ. Сцена çинчен пурте тухса кайсан, Митюкпа Петя та «ур-ра» кăшкăрса тухаççĕ. Пăшал пенисене илтсе каялла кĕреççĕ, ӳпне выртаççĕ, унтан каллех «ур-ра»! кăшкăрса тухса каяççĕ. Кăшт тăхтасан Мотя шпионка йăпшăнса тухать. Унпа пĕрле шуррисен салтакĕ-часовой та пур. Вăл хресчен пек тумланнă.

Мотя *(салтака)*. Эсĕ аякка ан кай, часах мана кирлĕ пулатăн.

Салтак-часовой. Есть, барышня! *(Тухса каять.)*

Сараев каялла çаврăнса кĕрет.

Мотя. Тăхтасам, ăçта пит васкатăн?

Сараев. Ой, Мотя?!

Мотя. Çапла, Мотя. *(Сараев патне йăпăлтатса пырать.)* Ах, хĕрсене ытла та час манатăр-çке эсир, каччăсем.

Сараев. Мĕн калаçатăр эсир? *(Мотьăна ыталасшăн. Мотя ихĕлтетет, Сараева питĕнчен аллипе шăлкалать.)*

Мотя. Сараев, итле-ха, ĕçе ытла вăраха тăсатăн. Паян хĕрлисен командирне Дубова мана тытса парасса шанатăп. *(Сараев — хăрани палăрать.)* Асту, шуррисен полковникĕ Дубовшăн мана виççĕр пин укça парать. Вара санпа эпир Хусанта магазинсем уçатпăр. Ун чух эсĕ чăн-чăн улпут пулăн. Трантас çинче юнашар ларса çӳрĕпĕр.

С а р а е в. Саншăн тем тума та хатĕр. Мĕншĕн-ха сана эпĕ пĕрре курсах çав тери килĕштерсе пăрахрăм? Кĕт мана çакăнта. Дубов часах санăн умăнта пулĕ. Кĕт! *(Кайма тăрать. Анчах ăна Мотя тытса чарать.)*

М о т я. Тăхта. *(Кĕсйинчен эмел кăларать.)* Акă, ме çакна, çывăратмалли эмел ку. Ну, телей сунатăп. *(Сараев каять. Мотя чупкаласа ун-кун пăхкалать.)* Темле ачасем килеççĕ тата. *(Пытанать.)*

Митюкпа Петя ерипен утса кĕреççĕ. Вĕсем пĕр-пĕрне кӳреннĕ. Петя тунката çине, Митюк унтан чылай аяккарах çĕр çине ларать.

П е т я. Санпа çӳресе çапăçăва кĕресси пулмастех ĕнтĕ. Командиртан ирĕк илмелле, тетĕн. Мĕн командиртан ыйтмалли пур унта.

М и т ю к. Ха, Дубов командир хушмасан, салтаксем пире хăйсен яхăнне те ямаççĕ-çке.

П е т я. Асту, ямаççĕ сана. Пĕр пулеметчикĕ патне йăпшăнса пыратпăр та ăна пеме пулăшатпăр.

М и т ю к *(кулать)*. Хе-хе-хе. Йăпшăнса терĕ тата. Мухтанчăк! *(Ура çине тăрать.)* Хăвна халь çеç пĕр пулеметчик мекĕлчĕк хуçтарчĕ иç. *(Урипе тапса кăтартать.)*

П е т я *(мăнаçлăн)*. Вăрçăра, Митюк, тем те тӳсме лекет.

М и т ю к. Юрĕ-çке. Халех Дубов командиртан ирĕк илĕпĕр.

Митюк Петя çумне тунката çине пырса ларать. Вĕсем каллех пĕрле, туслă.

П е т я. Аçта-ха вăл, Дубов командир?

М и т ю к. Паçăр çакăнтахчĕ-çке. Хамăр куçпа хамăр куртăмăр.

П е т я. Куртăмăр, куртăмăр.

М и т ю к. Алай çав.

П е т я *(Митюка хăй çумĕнчен çĕре тĕртсе ярать)*. Эх, эсĕ те çав, алай Мĕтри. Вăл паçăр пулнă. Унтанпа мĕнле вăйлă çапăçусем пулчĕç. Командир пĕр вырăнта тăмасть ĕнтĕ.

Митюк малтанах Петя тӗртсе янӑшӑн кӑмӑлсӑрланать. Анчах та кӳренни унӑн часах иртсе каять, вара ура ҫине сиксе тӑрать.

Митюк. Петя, атя тӳрех ҫапӑҫакан ҫӗре. Командира тупатпӑрах. Эпӗ ҫапӑҫу айккинче ҫӳреме килтен тарса тухман.

Петя (*Митюк ҫумне пырса тӑрать*). Эпӗ те Хусантан кунта ҫынсем ҫапӑҫнине курма каҫман. Кайрӑмӑр, Митюк. Тепӗр тесен, пирӗнсӗр пуҫне унта ӗҫ те тухас ҫук.

Митюк. Чӑн та ҫав. Хамӑр ҫитсен-и? Кӑтартӑпӑр-ха ҫав шуррисене.

Иккӗшӗ те хире-хирӗҫ тӑрса «Пӗчӗк параппанҫӑ» юрра пуҫлаҫҫӗ. Вара юрласа, урисене харӑс пусса, тухса каяҫҫӗ.
Мотя йӑпшӑнса тухать.

Мотя. Ф-у! Ҫав ачасенчен хӑраса пытанса ҫӳре. (*Айккинелле пӑхкалать.*) Ых-х, час килӗ-ши? Юрататӑп тесе йӑпӑлтатнипех ӗҫ тухӗ-ши? (*Тӗм кутне пырса ларать.*) Наганпа хӑратмалла марччӗ-ши? Ҫук, ҫук, вал чӑваш тункати мана ӗненет, ухмахскер. Эпӗ, улпут хӗрӗ, сана, Сараева, юрататӑп-и? Ман валли патша генералӗсем те темӗн чухлех. Ах, тытса паринччӗ хӑвӑртрах. Тем пекех кураймастӑп ҫав хӗрлисене. Пӗрерӗн-пӗрерӗн тытса тулӑттӑм. (*Кӗсйинчен наган туртса кӑларать. Тӗрӗслет.*) Авӑрланӑ. Паян эсӗ, чунӑм, мана хӑвӑн лайӑх ӗҫне туса памалла.

Сараев Дубов командира ҫурӑм ҫинче ҫӗклесе кӗрет. Мотя ҫакна курсанах наганне кӗсйине чикет.

Сараев (*Дубова ҫӗр ҫине йӑвантарса хурать*). Мотя, эсӗ мӗн хушнине турӑм. Хӗрлисен командирӗ Дубов сирӗн умӑрта.

Мотя (*савӑннипе аллисем чӗтреҫҫӗ. Дубов патне чупса пырать*). Пӗр командирне ҫаклатрӑм. Ых-х кураймастӑп хӗрлӗ шуйттансене, тем тума хатӗр.

Сараев. Мотя, халӗ ӗнтӗ Хусана каятпӑр-и? (*Чуптӑвасшӑн.*)

Мотя (*Сараева тӗртсе ярать*). Вӑхӑт мар халь!

Сараев (*тӗлӗнсе*). Мӗн эсӗ, Мотя?

Мотя (*хӑй йӑнӑш тунине ҫийӗнчех чухласа илет. Унтан вӑл ҫав тери ҫемҫен*). Каҫар мана. (*Питӗнчен ҫупӑрлать. Дубов ҫине кӑтартса.*) Пирӗн ҫакна штаба илсе ҫитермелле. (*Ҫӑварне пӳрне чиксе ши-ши! шӑхӑрать. Шуррисен салтакӗ тухать.*)

Шуррисен салтакӗ. Итлетӗп, барышня.

Мотя (*вилнӗ пек выртакан Дубов ҫине тӗллесе*). Ну-ка, ҫӗкле ҫак «ылтӑна».

Шуррисен салтакӗ. Мӗнле ылтӑн, барышня?

Мотя (*Дубов ҫине тӗллесе*). Акӑ вӑл, ылтӑн.

Шуррисен салтакӗ Дубова ҫурӑм ҫине ҫавӑрса хурать. Ана Сараев пулӑшать. Дубовӑн картузӗ ҫӗре ӳксе юлать.

Шуррисен салтакӗ. Ӑҫта илсе каймалла?

Мотя (*Сараева айккинерех чӗнсе илет*). Сараев, кунта сывӑхрах хӗрлисем ҫук-и?

Сараев. Ҫук. Ҫапӑҫу аякра пырать. Дубова эпӗ эсӗ панӑ эмеле шӑршлаттартӑм. Вара ҫырма тӑрӑх кунта ҫӗклесе килтӗм.

Мотя (*тухса каяс умӗн*). Сараев, тӑхта-ха, ридикюле таҫта хутӑм. Шыра-ха. (*Сараев унта-кунта шырать.*) Э-э, астурӑм. Куратна, веҫ, тунката ҫинче выртать.

Сараев тунката патне ҫывхарса пынӑ чух Мотя ӑна наганран перет.

Сараев (*кӑшкӑрса хӑйӗн сылтӑм аллине ярса тытать*). Ой, аллӑм! (*Ҫаврӑнса пӑхать. Мотя пенине курать.*) Мотя! Мотя! (*Мотя тепӗр хут перет. Сараев тӗмеске ҫине тӗшӗрӗлсе анать.*)

Мотя. Хӗрлисем патӗнче тӳрӗ кӑмӑллӑ пулайман ҫын, шуррисем патӗнче те ҫавах пулӑн. (*Чупса пырса тӗмеске ҫинчен тапса антарса ярать.*) Ку ӗҫшӗн мана полковник мӗнле кӗтсе илӗ ӗнтӗ? Ах, ылтӑн илес килнипе чун вӗчӗрхенсе тӑрать.

Тухса каять. Ӑна хирӗҫех Елизавета Яковлевна кӗрет. Хулпуҫҫи урлӑ хӗрлӗ хӗреслӗ сумка ҫакнӑ. Суранланнӑ Сараев курӑннӑ-курӑнман выртать.

Елизавета Яковлевна (*пуҫне уснӑ, хурлӑхлӑ*). Ах, турӑҫӑм! Ҫывӑхрах пӑшал сасси илтӗнчӗ. Ӑҫ-

та-ши ман Митюк? Тен, ҫапӑҫу хирӗнче аташса ҫӳрет пулӗ? Тен, пуля лексе вилсе выртрӗ пулӗ. Аҫтан ҫын тӳстӗр? Тӗнче мӗнле кӗрлесе тӑрать. Пуля пӑрлӑ ҫумӑр пек ҫӑвать. *(Тункката ҫине ларать.)* Упраймарӑм ывӑлӑма. Мӗнле пулса тухрӗ-ха капла? Ашшӗпе тӗл пулсан, мӗн калӑп ӗнтӗ ӑна... *(Ӗсӗклесе йӗрет.)*

Сараев *(йынӑшать)*. А-ӑ... шыв... Пулӑшӑр...

Елизавета Яковлевна *(шартах сикет)*. Пӗтрӗ пуҫах. Такам йынӑшать пулас. Чӗрем сиксех тухать. *(Унталла-кунталла пӑхать.)* Ах, Митюк ывӑлӑм мар-ши? *(Сараева курать, ун патне хыпаланса пырать. Пӗшкӗнсе пӑхать, хӑйпе хӑй калаҫать.)* Ах, темле салтак! Аманнӑ ку, мӗн чухлӗ юн юхтарнӑ. *(Сараева.)* Ырӑ ҫыннӑм, эсӗ аманнӑ-им?

Сараев. Суранлатрӗҫ, ах-ах...

Елизавета Яковлевна. Кӳр часрах суранна ҫыхса ярам. Бинт ҫителӗклӗ. Тин кӑна Сала больницинчен илсе килетӗп. *(Сумкӑран бинт, вата кӑларса Сараев суранне ҫыхать.)* Иодпа сӗрнӗ чух вӗтелет те ӗнтӗ, тӳс. Эпӗ сана малтанхи пулӑшу парӑп. Вара санитарсем килӗҫ те госпитале илсе кайӗҫ. Унта сана тухтӑрсем сыватӗҫ.

Сараев. Ҫу-ук, нимле госпитале те каймастӑп эпӗ. Пӗлетӗп, унта ман пуҫа пӑраҫҫӗ.

Елизавета Яковлевна. Эсӗ, ҫамрӑк ҫын, аташатӑн пулас. Сурану питӗ ыратать ӗнтӗ.

Сараев. Тавтапуҫах. Эсир ҫыхса янӑ хыҫҫӑн суран лӑштах пулчӗ.

Аякран тупӑран пени илтӗнет.

Елизавета Яковлевна *(пуҫне ярса тытать)*. Турӑҫӑм, мӗн чухлӗ ҫын пӗтет... Мана Сала больницинчен иод, бинт, вата илсе килессе кӗтеҫҫӗ. Ман каймаллах. Сана йывӑр пулмӗ-ши?

Сараев. Кайӑр, кайӑр. Халӗ мана пӗччен выртнинчен ырри нимӗн те ҫук.

Елизавета Яковлевна. Ма унашкал калаҫан?

Сурану юсанӗ. Санитарсене халех ярӑп, питех ан пӑшӑрхан.

Сараев. Санитарсене яма кирлӗ мар. Ҫӑшт канатӑп та, эпӗ хамах каятӑп.

Елизавета Яковлевна. Хӑвӑнне ху пӗл. *(Елизавета Яковлевна тухса каять. Сараев пӗчченех).*

Сараев *(тӑрасшӑн тӑрмашать. Чӗркуҫленсе ларать)*. Вӑт юрату! Чутах пуҫа ҫиеттӗм. Ҫӗлен пуҫлӑ хӗрарӑм. Ых-х! *(Аллине чӑмӑртаса юнать.)* Сана-и, Мотя! Тӗл пул кӑна, шӑмму витӗр курӑк шӑтӗ. Пурпӗрех тавӑратӑп! *(Тӑрасшӑн, анчах каллех кайса ӳкет те лӑпланать.)*

Митюкпа Петя упаленсе кӗреҫҫӗ.

Митюк. Хам куҫпа хам куртӑм. Леш, пӗрмай Дубов командирпа ҫӳрекенни, Сараев текенни, командира пуҫӗнчен хура япалапа шап! ҫапрӗ.

Петя. Куртӑнах-и вара?

Митюк. Куртӑм пулмасӑр. Ара эсӗ ун чухне пулеметчика пулӑшаттӑнччӗ. Ҫапла. Эпӗ, командирӑн каллех шыв ӗҫес килмест-ши тесе, ун патне котелокпа шыв илсе пыраттӑм. Чиперех шуса пыраттӑм, курах кайрӑм хайхи. Сараевӗ командира пуҫӗнчен хура япалапа шап! тутарчӗ. Вара ӑна ҫурӑм хыҫне хучӗ те ҫырма тӑрӑх яртлаттара пачӗ.

Петя. Апла пулсан, Сараев вӑл тӑшман.

Митюк. Сана шыраса куҫран вӗҫертрӗм эпӗ Сараевне. Ах, ӑҫта-ши командир?

Петя. Кунталла килчӗ терӗн вӗт-ха, шырар. *(Ура ҫине тӑраҫҫӗ.)*

Митюк *(малалла утать. Сасартӑк командир картузне курать)*. Пӑх-ха, командир картузӗ. *(Чупса пырса Дубов картузне илет)*. Ӑҫта илсе кайрӗ-ши командира? Вӗлермерӗ-ши ӑна?

Петя. Кашни тӗм кутнех шырас пулать. Ҫак таврара пулма тивӗҫ вӑл. *(Йынӑшни илтӗнет.)*

Митюк. Чим, кам пур кунта? Чип-чиперех илтрӗм

йынӑшнине. Дубов командир мар-ши? Ҫаларӑм вӗт сана, кунталла илсе килчӗ, терӗм.

П е т я *(суранланнӑ ҫынна курса)*. Ав, вӑл выртать. *(Ачасем иккӗшӗ те унталла ыткӑнаҫҫӗ.)*

М и т ю к. Командир юлташ!

П е т я. Тӑхта, ку Дубов мар.

М и т ю к. Петя, ара ку лешӗ, Сараев текенни.

П е т я. Предатель!

М и т ю к. Ирсӗр тӑшман.

Сараев хускалать. Ачасем тӗм хыҫне лӑпчӑнса лараҫҫӗ. Петя хӗвӗнчен наганне туртса кӑларать.

С а р а е в *(чӗркуҫҫи ҫине тӑрать)*. Мӗн тӑвас-ши ӗнтӗ халь ман? Шуррисем патне каяс, пушӑ алӑпа йышӑнмӗҫ. Хӗрлисем патне каяс, «Дубов ӑҫта» тесе ыйтӗҫ. Мӗн тӑвас? Мӗн тӑвас?!

Наганне малалла тӑсса, ӳпне ӳкет. Митюкпа Петя хыҫалтан шӑвӑнса пыраҫҫӗ те, Митюк унӑн наганне туртса илет.

М и т ю к п а П е т я. Стой! Руки вверх!

М и т ю к *(наганпа тӗллесе)*. Вырӑнтан ан хускал!

П е т я *(наганпа тӗллесе)*. Халех персе пӑрахатӑп. Тӑшмана — йытӑ вилӗмӗ.

С а р а е в *(чӗтресе ӳкет. Аран ура ҫине тӑрать)*. Мӗн эсир, ача вӑййи выляс тетӗр-и? Наганпа ашкӑнмаҫҫӗ.

М и т ю к. Эпир пӗрре те ашкӑнмастпӑр.

Сараев сасартӑк Митюк патнелле туртӑнать, унӑн аллинчи наганне туртса илесшӗн пулать. Анчах та Петя Сараева хӑвӑрт пӳлет.

П е т я. Ҫӗкле аллуна, хӑвӑртрах!

М и т ю к. Эсӗ тӑшман! Эсӗ Дубов командира вӗлернӗ.

С а р а е в. Эпӗ вӗлермен ӑна! Эпӗ айӑплӑ мар.

П е т я. Мӗнле айӑплӑ мар? Эсӗ Дубов командира пусӗнчен ҫапнине Митюк курнӑ.

С а р а е в *(айккинелле)*. Эпӗ никам та курмасть пуль тенӗччӗ.

М и т ю к. Вӗлермен пулсан, кала часрах, командира ӑҫта хутӑн?

П е т я. Ăçта хутăн Дубов юлташа?

С а р а е в. Эпĕ... хуман ăна. Лешĕ, çĕлен хĕрарăм, шпион, шуррисен штабне йăттарса ячĕ. Мотинне пуçне пăрса ямалла.

М и т ю к. Шуррисен штабне? Петя, атя часрах командира çăлма! *(Малалла чупма тăрать. Сараев тепĕр еннелле шăвăнма тăрать.)*

П е т я. Стой! Малтан ку предателе хĕрлисен штабне ăсатмалла.

Митюк çиçĕм пек каялла çаврăнать.

М и т ю к *(Сараева)*. Ут малалла, тăшман!

Сараев хăра-хăра утать. Митюкпа Петя ун хыçĕнчен наганĕсене тĕллесе пыраççĕ.

ЧАРШАВ.

## ВИÇÇЕМĔШ ПАЙĔ

Шуррисен штабĕ. Тӳрех — иккĕмĕш пӳлĕм. Унта кĕмелли алăка марлĕпе карнă. Ун витĕр эрех кĕленчисем лартса тултарнă сĕтел, офицерсем курăнаççĕ.

Алăкăн ку енче часовой тăрать. Ку пӳлĕмĕн пĕр енче—тултан кĕмелли, тепĕр енче — çӳлти хута хăпармалли алăксем.

Штабра калаçни илтĕнет.

Полковник. Ну, господа, ыйтусем пур-и?

Сасă. Манăн пур. Пирĕн командовани Мускава хăçан илме палăртнă?

Полковник. Вăл, господа, пĕтĕмĕшпех хамăртан килет. Хусан, хăвăрах куратăр, пирĕн алăра. Çитес эрнере Мускавра пулатпăр. Вара большевиксен влаçĕ тĕпĕпех арканать, аслă Раççейра ĕмĕртенпе пулнă йĕркесем тепĕр хут ĕмĕрлĕхе çирĕпленеççĕ.

Часовой *(пăшалне шăлтăр-шалтăр авăрласа кăшкăрса ярать)*. Кам унта?

Полковник урнă пек чупса тухать. Мотя шпионка кĕрет.

Полковник *(алăкран кĕрекен Мотьăна курсан, кăмăллăн ун патне пырать)*. Ах, Матильди?!

Мотя. Эпĕ — Эльвира.

Полковник *(аллине чуптăвать)*. Каçарсамăр, тархасшăн. *(Малти пӳрте çавăтса кĕрет. Мотя часовоя питĕнчен шăлса йĕкĕлтесе хăварать. Каллех калаçни илтĕнет.)* Çапла, господа, Мускав çине кайма хатĕрленĕр.

Сасă. Нумай салтаксем эпир Мускава илессе шанмаççĕ.

Тепӗр сасӑ. Вӗсем винтовкисене пӑрахса килӗсене кайма шутлаҫҫӗ.

Полковник *(ҫиленсе кӑшкӑрса пӑрахать)*. Ҫитет палкама, хупӑр ҫӑварӑра!

Сасӑ. Эпир хупатпӑр, салтаксем хупмаҫҫӗ.

Полковник. Молчать!

Часовой *(хӑранипе кӑшкӑрса ярать, тӳрленсе тӑрать)*. Рад-стараться!

Полковник *(часовой сассине илтсе сиксе тухать)*. Мӗн пулнӑ?

Часовой. Ваше скороди, ним те пулман, айӑплӑ.

Полковник. Болван! Чим, вӗрентем эпӗ сана ӑса. Ша-агом марш! *(Каллӗ-маллӗ уттарса ҫӳрет.)* Кру-угом! Айт-два! Ложись! встать!

Часовоя тӑратса хӑварать, хӑй каллех малти пӳрте тухать.

Полковник. Мӗн калаҫнипе ҫитет. Халӗ саланма вӑкӑт. Кӗҫӗр лайӑх канăр та, ҫапӑҫӑва хатӗрленӗр. Кайма пултаратăр.

Офицерсем туха-туха каяҫҫӗ. Малти пӳртрен Мотя чех офицерӗпе — Францпа алла-аллӑн тытӑнса тухать.

Офицер. Эльвира, эпӗ сана ҫӳлте кӗтетӗп.

Мотя. Тепӗр темиҫе минутран пыратӑп.

Офицер Мотя аллине чуптӑвать. Вара Мотя каялла ҫаврӑнса малти пӳрте кӗрет, офицерӗ картлашкапа улӑхса куҫран ҫухалать. Малти пӳртре полковникпе Мотя иккӗшех юлаҫҫӗ, эрех ӗҫеҫҫӗ.

Мотя. Ну, полковник, ман ӗҫе мӗнле хаклатӑр?

Полковник. Тивӗҫлипе, тивӗҫлипе. *(Сӗтелтен пӗр ҫыхӑ укҫа кӑларса, Мотьӑна парать, унтан ӑна ӑшӑн чуптӑвать. Часовой ҫакна курса тӗлӗнсех каять.)*

Часовой. Вӑт тӳссе тӑр ӗнтӗ кунта... *(Унӑн аллинчи пӑшал ҫӗре шаплатса ӳкет. Вӑл пӑшалне илет те хӑвӑрт алӑкран тухса ҫухалать. Полковник ҫак сасса илтсе сиксе тухать, ун-кун пӑхкалать. Никам та ҫуккине курсан, лӑпланать. Малти пӳртрен Мотя та тухать.)*

М о т я. Мĕн пек пысăк кайăка лектертĕм те вара, эсир мана, господин полковник, виççĕр пин çеç тӳлетĕр.

П о л к о в н и к. Мускава илсен, чунăм, ылтăн айне тăвăп.

Полковник Мотьăна питĕнчен чуптăвать. Мотя çӳлти хута хăпарса каять. Полковник пĕчченех.

П о л к о в н и к. Часовой!

Ч а с о в о й *(тултан)*. Итлетĕп!

П о л к о в н и к. Леш большевикне тепĕр хут илсе кĕр!

Ч а с о в о й. Итлетĕп!

Полковник малти пӳлĕме кĕрсе каллех эрех тултарса ĕçет. Çак вăхăтра кантăкран Митюкпа Петя пăхаççĕ.

М и т ю к. Аçта-ши командир?

Полковник кĕрет, ачасене кутăн тăрса, Дубова илсе кĕрессе кĕтет.

П е т я. Ох пуçĕ, çĕлен тирĕ пек йăлтăртататъ!

М и т ю к. Парасчĕ пуçĕнчен, арбус пек çурăлса кайĕччĕ.

П е т я. Пăх-ха, командира илсе килеççĕ. Куратăн-и?

М и т ю к. Куратăп. Ана хĕнесе пĕтернĕ пулмалла.

П е т я. Паллах. Çапах та, начар боецсем эпир.

М и т ю к. Мĕншĕн?

П е т я. Кунта канашлу пынă вăхăтра ăна шыраса тупса хăтармаллаччĕ пирĕн.

М и т ю к. Петя, чуп часрах хамăрăннисем патне. Дубов кунта иккенне пĕлтер. Эпĕ юлатăп.

Иккĕшĕ те çухалаççĕ. Дубова тĕртсе кĕртеççĕ. Вăл çуркаланса пĕтнĕ шурă кĕпепе, çăварĕнчен юн юхса аннă.

П о л к о в н и к. Ларăр.

Часовой Дубов аллине салтать те ăҥа пукан çине тĕртсе лартать.

П о л к о в н и к. Ну, мĕнле, сурансем ытлашши аптратмаççĕ-и?

Д у б о в *(аран-аран ларать пулин те)*. Нимĕн чухлĕ те...

П о л к о в н и к. Апла, хальхинче эпир сирĕнпе йĕркеллех каласма пултаратпăр. Çапла-и?

Д у б о в. Эпир сирĕнпе нихçан та йĕркеллĕ калаçма пултараймастпăр.

П о л к о в н и к. Мĕншĕн?

Д у б о в. Мĕншĕн тесен эпĕ сирĕн тăшман, эсир манăн тăшман. Тăшмансем нихçан та пĕр чĕлхе тупаймаççĕ.

П о л к о в н и к. Тен, эпир сирĕнпе тупăпăр, а?

Д у б о в. Нихçан та.

П о л к о в н и к *(уткаласа çÿрет)*. Çав çулпах каяс тетĕр пулсан, астăвăр, паçăрхи тĕлпулăва аса илĕр. *(Пауза.)* Илтрĕр-и? *(Дубов умнех пырса тăрать.)* Ну вăт, сирĕн пурнăçăр халь пĕтĕмĕшпех ман алăра. Эпĕ сире икĕ вариант паратăп: пĕри вăл пурнăç, тепри — вилĕм. Илтетĕр-и?

Д у б о в. Илтетĕп.

П о л к о в н и к. Питĕ аван. Апла сирĕн пурăнас килет-и е вилес килет-и?

Д у б о в. Тĕнчере кашни çыннăннах пурăнас килет.

П о л к о в н и к. Сире телейлĕ пурнăç кĕтет.

Д у б о в. Çапла, пирĕннисене телейлĕ пуласлăх кĕтет.

П о л к о в н и к. Йăнăшатăр. Хĕрлисене вилĕм кĕтет. Сире вара, Раççее большевиксенчен çăлса хăварассишĕн пĕр пĕчĕк кăна ĕç тусан та, çутă малашлăх кĕтет. Вăл халĕ сирĕн алăра. Çак ыйтусем çине çеç ответлĕр. Тĕрлемес таврашĕнче миçе хĕрлĕгвардеец? Вĕсем мĕнпе хĕçпăшалланнă?

Д у б о в. Пĕлместĕп.

П о л к о в н и к. Мĕнле пĕлместĕр? Эсир, çапах та, батальон командирĕ.

Д у б о в. Пĕлместĕп. Ăна никам та пĕлмест.

П о л к о в н и к. Мĕншĕн никам та?

Д у б о в. Мĕншĕн тесен халĕ алла хĕçпăшал тытма пултаракан кашни ĕççынниех хăйне хĕрлĕгвардеец тесе шутлать. Вĕсем пурте хăйсен ирĕкĕпех сире хирĕç çапăçма тăраççĕ.

Полковник. Ҫăна эсир мана хăратас шутпа калатăр. Анчах астăвăр, эпĕ унашкал йышши мар. Тепĕр ыйту. Шăхранпа Арзамасра мĕнле-мĕнле чаҫсем тăраҫҫĕ?

Дубов. Нумай унта. Питĕ нумай. Сирĕн часах йĕмсене ҫĕклесех тармалла пулать.

Полковник. Эсĕ ҫапла калаҫатăн-и манпа, мерзавец!

Дубов. Эпĕ меразвец мар, эпĕ коммунист!

Полковник *(Дубов умне йăпшăнса пырать)*. Ах, авă мĕнле. Коммунист эппин?!

Дубов. Ҫапла.

Полковник (ҫаннине хăпартса). Ме-ха эппин сана, господин коммунист! *(Дубова пĕтĕм вăйран ҫапать, лешĕ йăванса каять. Унтан урипе пырса тапать)*. Мерзавец! Часовой! Ĕҫме пар.

Часовой. Итлетĕп! *(Подноспа пĕр стакан эрех кĕртсе парать.)* Тархасшăн!

Полковник *(ĕҫсе)*. Лайăх япала. Ăҫтан тупрăн?

Часовой. Вырăнти пуянсем ятарласа сире валли илсе килсе пачĕҫ.

Полковник. Апла эппин?

Часовой. Ҫапла, господин офицер.

Полковник. Хăйсене кам мĕн панине лайăх пĕлеҫҫĕ вĕсем.

Часовой. Ҫапла, пĕлеҫҫĕ.

Полковник. Мĕн пĕлеҫҫĕ?

Часовой. Хăйсене кам мĕн панине лайăх пĕлеҫҫĕ.

Полковник. Ҫамсем?

Часовой. Вĕсем.

Полковник. Ҫамсем вĕсем?

Часовой. Вĕсем те, кусем те. Так точно!

Полковник. Болван!

Часовой. Так точно, господин!

Часовой подноспа стаканне илсе тухса каять. Полковник Дубова урипе тĕртсе пăхать. Леш хирĕҫ ним те чĕнменнине пула, юсанкаласа ҫӳлти хута улăхса каять. Митюк чӳречерен сиксе кĕрет. Вăл

ун-кун пăхкаласа илет те тӳрех Дубов патне ыткăнать. Çак вăхăтра часовой кĕрет.

Часовой. Стой! Руки вверх! *(Митюка кĕпе çухавинчен ярса илет. Леш çăлăнса чӳрече патнелле ыткăнать, анчах сикме ĕлкĕреймест, часовой ярса тытать.)*

Полковник *(чупса тухать)*. Кам унта?

Часовой. Темле ача, господин полковник!

Полковник. Ну-ка, кил-ха кунтарах. *(Часовой Митюка полковник патнелле тĕртсе ярать.)*

Митюк *(чĕркуççи çине тăрса)*. Итлетĕп сире, господин офицер.

Полковник. Офицерсене ăçтан пĕлетĕн-ха эсĕ?

Митюк. Питĕ лайăх пĕлетĕп эпĕ вĕсене.

Полковник. Ыйткалакансем те офицерсене пĕлесçĕ-и?

Митюк. Господин офицер, эпĕ халиччен ыйткалакан пулман.

Полковник *(çаплах кулса)*. Апла, тен, эсĕ халиччен офицер пулнă пулĕ?

Митюк. Манăн атте офицер.

Полковник. Офицер? Аçу офицер-и?

Митюк. Çапла, господин офицер. Манăн атте тахçантанпах офицер. Эпĕ аттене шырама тухнă.

Полковник. Аçуна?

Митюк. Чăнах калатăп. Эпĕ унпа юнашар тăрса тăшманпа çапăçасшăн.

Полковник. Авă мĕнле. Эсĕ, шĕвĕр, мĕнле тăшманпа çапăçасшăн-ха аçупа пĕрле?

Митюк. Хамăр тăшмана хирĕç.

Полковник. Кам-ха вăл, сирĕн тăшман?

Митюк. Вĕсем-и? Вĕсем, господин офицер, айăпсăр çынсене вĕлерекенсем, хресченсен пурлăхне çаратакансем. Акă камсем вĕсем!

Полковник. Чĕрĕ калаçатăн, шĕшлĕ аври. Ну-ка, кала, кам ячĕ сана кунта?

Митюк. Эпĕ хамах килтĕм.

Полковник. Шăплан, йытă çури! Кам ячĕ сана кунта?! Мĕнле ĕçпе?!

Митюк. Эпĕ... эпĕ, господин офицер, чăнах калатăп, пĕр пытармасăр...

Полковник. Кала!

Митюк. Ялта текех пурăнма май çук.

Полковник. Мĕншĕн?

Митюк. Эсир, господин офицер, хăратсах пăрахрăр мана.

Полковник. Кала, кала.

Митюк. Яла пирĕн тăшмансем пырса кĕчĕç те тытăнчĕç тустарма.

Полковник. Мĕн?!

Митюк. Тĕрĕсех калатăп, господин офицер. Çын мар вĕсем, тăшмансем. Тархасшăн аттене тупма пулăшар мана...

Полковник. Çитет! *(Часовоя.)* Илтрĕн-и, мĕнле калаçать?

Часовой. Илтрĕм. Лайăх калаçать, господин полковник.

Полковник. Болван! *(Митюка.)* Кала-ха, мĕнле ĕçпе ячĕç сана кунта?

Митюк. Мана никам та яман. Эпĕ аттене шыратăп.

Полковник *(Митюк патне пырать те ун хăлхине пăрать)*. Калатăн-и?

Митюк *(ыратнипе çухăрать)*. Манăн нимĕн каламалли те çук. Ярăр мана... Ярăр! Эпĕ аттене шыратăп.

Полковник *(часовоя, Дубов çине кăтартса)*. Тăратса ларт-ха çавна.

Часовой. Итлетĕп! *(Дубова тăратса лартать. Дубовпа Митюк пĕр-пĕрин çине пăхса илеççĕ.)*

Полковник *(Митюка)*. Çакă мар-и санăн офицерта тăркан аçу?

Митюк. Мĕн эсир, господин офицер. Ку çынна ĕмĕрне те курман.

Полковник *(Дубова)*. Эсир те курман-и ку ачана?

Дубов. Ача тёрёс калать.

Полковник. Курман апла?!

Дубов. Курман.

Полковник *(Митюка)*. Лайăхрах пăх-ха, тен, курнă пулĕ эсĕ ăна?

Митюк. Курман, пĕлместĕп.

Полковник. Курман пулсан, ме, кур! *(Митюка çапса сирпĕтсе ярать.)*

Дубов. Айăпсăр ачана мĕншĕн хĕнетĕр?

Полковник. Акă мĕншĕн! *(Дубова та çапса сирпĕтет, темиçе хутчен урипе тапать.)* Мерзавецсем. Вăт вăрç ĕнтĕ вĕсемпе. Вилеççĕ, çаплах парăнмаççĕ. *(Часовоя.)* Итлесе пăх-ха, вилсе каймарĕ-и?

Часовой. Итлетĕп! *(Çĕрте выртакан Дубов кăкри çине хăлхине хурса итлет. Кулса ярать.)* Сывлани сисĕнмест, господин полковник.

Полковник. Ну-ка, хам итлем.

Полковник пуçне Дубов кăкри çине хурса илет. Çав вăхăтра малти пӳлĕмĕн уçă алăкĕнчен Павăлпа Петя курăнса каяççĕ те хăвăрт пытанаççĕ.

Полковник. Болван! Пĕр витре сивĕ шыв илсе кĕр. Часах тăна кĕртĕпĕр.

Часовой. Итлетĕп! *(Тухса каять).*

Полковник *(наганне аллине тытса)*. Ну, хальхинче калаттаратăпах сана...

Полковник уткаласа çаврăнать те Митюка хыçпа тăрать. Митюк, çак меллĕ майпа усă курса, ăна икĕ урипе те чĕркуççинчен тапать. Лешĕ персе анать. Павăлпа Петя сиксе тухаççĕ те полковник çăварне тутăр чикеççĕ, аллисене каялла çыхаççĕ. Митюк унăн наганне илет. Павăл Дубов патне ыткăнать.

Павăл *(Дубова)*. Ну, мĕнле, командир юлташ?

Дубов *(тăна кĕрсе)*. Эсир-и ку? Тавтапуç.

Павăл *(Дубова çĕклесе тăратать)*. Кайран, халĕ васкамалла. Петя, командир юлташа пулăш-ха.

Петя *(малти пӳлĕмелле кăтартса)*. Командир юлташ,

атя кунталла, чӳречерен сикетпĕр. Урамра хамăрăннисем лашасемпе кĕтеççĕ.

Дубова çавăтса тухса каять.

П а в ă л *(унталла-кунталла пăхса)*. Митюк, сĕтелне уçса документчĕсене пуçтарса чик.

Митюк ашшĕ мĕн хушнине хăвăрт пурнăçлать.

М и т ю к *(полковник çине кăтартса)*. Атте, кăна илетпĕр-и?

П а в ă л. Хăварар мар.

Алкумĕнчен ура сассисем илтĕнеççĕ, кусем, полковнике пăрахсах, умлăн-хыçлăн чӳречерен сикеççĕ. Часовой витрепе шыв йăтса кĕрет. Тĕлĕнсе пăхса тăрать.

Ч а с о в о й. Мĕне пĕлтерет ку япала?..

ЧАРШАВ.

## ТАВАТТАМЁШ ПАЙЕ

Чаршав умне Павăлпа Митюк тата Петя тухаççĕ.

П а в ă л. Митюк, сан валли ман паян пысăк ĕç пур.

П е т я. Ман валли çук-и?

П а в ă л. Эсĕ те ĕççĕр юлмăн. Эсир иксĕр те матур ачасем.

П а в ă л. Митюк, эпĕ сана чугун çул хĕрне яратăп.

М и т ю к. Эпĕ унта чăш! çеç чупса çитетĕп. Кала, мĕн тумалла?

П а в ă л. Шăхранран пире халь-халь пулăшу килсе çитмелле. Çакăн çинчен шуррисем пĕлнĕ пулас. Хусантан хĕçпăшал тиесе килнĕ пуйăс Тĕрлемес станцине çитиччене чарăннă. Ана каялла яма памалла мар. Сана, Митюк, Дубов командиртан задани: çав состава сывлăша сирпĕтмелле. Акă, ме сана мĕн кирлине. *(Кĕсйинчен взрывчатка коробки кăларса парать).*

П е т я. Павăл пичче, эпĕ те Митюкпа пĕрле каятăп.

П а в ă л. Петя, сана унпа каймa юрамасть. Дубов хушмарĕ, Петя вăл кунта кирлĕ пулать, терĕ.

П е т я. Ниушлĕ Дубов юлташ çавăн пекех каларĕ? Çаплах, «Петя» тесе ятранах каларĕ-и?

П а в ă л. Ятранах каларĕ.

П е т я. Ой, командир мана ятпах асăннă.

П а в ă л. Ну, калаçса татăлтăмăр. Митюк, сана эпир хуçăлнă хурăн патĕнче кĕтетпĕр. Анлантăн-и?

М и т ю к (*аллине çĕклесе*). Есть! Ăнлантăм, командир юлташ. Митюк Юркин кайма хатĕр.

П а в ă л. Апла пулсан, çамрăк Юркин, сана çула тухма хушатăп. Сывă пул! (*Ывăлне ыталать.*)

П е т я. Митюк, ăнăçлăх сунатăп.

М и т ю к. Тавтапуç, тусăм. (*Петьăна ыталаса илет те хăвăрт çухалать. Павăлпа Петя та çухалаççĕ.*)

Ерипен чаршав уçăлать.
Вăрманлă вырăн. Çывăхрах чугун çулĕ. Йывăç айĕнче, сак çинче, Мотяпа чех офицерĕ лараççĕ. Мотя Францран çаврăнса айккинелле пăхса ларать, хăй питĕ хурлăхлă.

Ф р а н ц (*аллинчи чечекне çавăркаласа*). Эльбина, эпĕ сан валли питĕ хитре чечек татрăм.

М о т я (*çаврăнса пăхмасăрах*). Мĕнле чечек?

Ф р а н ц. Питĕ илемлĕскер.

М о т я. Кӳр, пар. (*Франц парать. Мотя чечеке илет. Пăхать те хăрасах каять.*) Ой, сарă чечек! Ку ырра мар. (*Офицер патнелле çаврăнса, чечеке каялла парать.*) Алла илместĕп эпĕ ăна.

Ф р а н ц. Мĕншĕн?

М о т я. Эсĕ чех офицерĕ, вырăс йăлисене пĕлместĕн. Сарă чечек парнелени уйрăласса пĕлтерет.

Ф р а н ц. Ан ĕнен кирлĕ мар тĕшмĕше. Эпир пĕр-пĕрне юрататпăр-çке. Çак ырă шăршăллă чĕлтĕрти чечекĕн ăçтан пире уйăрма хăват çиттĕр? Совет влаçне таптаса лапчăтсан, эпир санпа Питĕр хулине пурăнма куçатпăр. Унтан Парижа! Прагăна! Çапах та, ку чечеке сана парнелетĕпех. (*Чечеке Мотьăна ирĕксĕрех тыттарать.*)

М о т я (*хăраса*). Кирлĕ мар, кирлĕ мар. Уйрăлатпăр. Юрĕ-çке ĕнтĕ, парнеле. Пурпĕрех уйрăлмалла. Санпа юлашки минутсем çӳресе савăнатăп.

Ф р а н ц. Мĕншĕн ун пекех пăшăрханатăн?

М о т я. Тем пулас, тем килес. Пирĕн професси питĕ йывăр.

Ф р а н ц. Йывăр та, укçаллă. Ĕнер ав мĕнлине çаклатса килтĕн.

М о т я *(улшӑнса, усалланса каять, ура ҫине сиксе тӑрать)*. Ых-х, кукша пуҫ полковник, ҫӑвара хурса панине ҫӑтса яма пӗлмерӗ. Ых-х, хам пулман ҫавӑнта.

Ф р а н ц. Пурччӗ те, иксӗмӗр те ҫӳлти хутра йӑпанса юлтӑмӑр.

М о т я. То-тӑ ҫав.

Ф р а н ц. Юрӗ-ҫке, ытлашши ан кулян. Акӑ, паян татах каятӑн. Тен, тата пысӑкраххине ҫаклатса килӗн.

Шуррисен салтакӗ чупса кӗрет.

С а л т а к *(хӑй питӗ хӑранӑ)*. Го-го-гос-подин офицер!

Ф р а н ц. Мӗн вӑхӑтсӑр чӑрмантарса ҫӳретӗн, болван?!

С а л т а к. Го-гос-господин офицер, офицер!

Ф р а н ц. Мӗн пулнӑ, кала, болван.

С а л т а к. Господин офицер, хӗрлисем килеҫҫӗ, тет, бронепоездсемпех, тет. Пирӗннисен хушшинче па-па-паника.

Ф р а н ц *(салтак умне пырса тӑрать)*. Мӗнле паника? Кала, мерзавец!

С а л т а к. Эпӗ мар, эпӗ мар, господин офицер.

Ф р а н ц. Полковник ӑҫта?

С а л т а к. Вӑл сире шыраса тупма хушрӗ.

М о т я *(хӑранӑ сасӑпа, Франца)*. Ку ухмахскер чӑнах калать-и?

С а л т а к. Чӑнах калатӑп, барышня, пӗрре те суймастӑп.

Ф р а н ц *(Мотьӑна)*. Пирӗн чӑн та чакмаллах пулсан, эсӗ хӗрлисен тылне юлатӑн. Эпир кунта каялла килесси санран та нумай килет.

М о т я *(алӑ парса)*. Турӑ пулӑштӑрччӗ.

Ф р а н ц *(Мотя аллине чуптуса)*. Турӑ пулӑштӑр.

Францпа салтак — пӗр енне, Мотя тепӗр енне тухса каяҫҫӗ. Шуррисен кутамкка ҫакнӑ салтакӗ васкаса кӗрет. Аллинче чӑматан. Ун хыҫӗнченех майралла тӑхӑннӑ хӗрарӑм кӗрет.

Х ĕ р а р ă м. Мĕншĕн вăрттăн тухса таратăн? Эсĕ мана хупа пĕрле Мускава илсе каятăп терĕн-çке. Тем тусан та санран юлмастăп. *(Салтака аллинчен ярса тытать. Лешĕ çăлăнасшăн çапкаланать.)*

С а л т а к. Мĕн ман хыççăн йăкăртатса пыратăн эсĕ? Ăçта илсе каям эп сана? Юл, ан пыр ман хыççăн сĕтĕрĕнсе. Сан пек ухмах хĕрарăмсем тĕнче туллиех.

Вĕсем тавлашкаласа, турткалашса тăнă чух икĕ чăваш хĕрарăмĕ чупса кĕреççĕ.

1-м ĕ ш х ĕ р а р ă м *(шуррисен салтакне).* Акă ăçта вăл, шуйттан хырăмĕ! Ман юлашки сурăха пусса çирĕ. Ах, çăмĕ лайăхчĕ.

2-м ĕ ш х ĕ р а р ă м. Кума, ан яр ăна, хĕрлисене тытса паратпăр.

1-м ĕ ш х ĕ р а р ă м. Пăх-ха эсĕ ăна, хĕрлисем çитнине сиснĕ те — тарма. Парăпăр сана тарма!

Салтака çĕре тăсса ӳкереççĕ. Лешĕ, ним тума аптранă енне, наган туртса кăларса çӳлелле перет. Хĕрарăмсем хăранипе виççĕшĕ те пусĕсене чикеççĕ. Çак самантпа усă курса, салтак тăрса тарать.

Х ĕ р а р ă м. Тем тусан та санран юлмастăп. Халĕ ман ял-йыш умне мĕнле курăнмалла. *(Салтак хыççăн тухса каять.)*

Хĕрарăмсем ура çине тăраççĕ.

2-м ĕ ш х ĕ р а р ă м. Ах, мур çимен тăшманĕсем! Хуратул анине пĕтĕмпех таптаса пĕтерчĕç. Вĕсене пула кăçал выçă юлатпăр. Мĕн çисе пурăнăпăр?! Çур тырри вырнă çĕртен киле таврăнтăм та, пăхатăп, çӳпçене веç якатса кайнă, пĕр япала та хăварман.

1-м ĕ ш х ĕ р а р ă м. Хамăн та сурăхĕ питĕ вăрăм çăмлăччĕ.

2-м ĕ ш х ĕ р а р ă м. Кума, ун хыççăнах каяр-ха, пĕрех хамăрăннисене тытса паратпăр ăна.

Тухса каяççĕ. Унччен те пулмасть хăватлă взрыв сасси кĕрлесе каять. Хĕрарăмсем хăраса каялла чупса кĕреççĕ. Вĕсен умĕнченех Митюк чупса иртет. Ун хыççăнах полковникпе салтак чупса тухаççĕ.

П о л к о в н и к *(хĕрарăма)*. Эй, эсир кунта никама та курмарăр-и?

1-м ĕ ш х ĕ р а р ă м. Çук, никама та...

2-м ĕ ш х ĕ р а р ă м. Çав пуйăс рельса çинчен сирпĕнсе кайсан, пирĕн чутах сехре хăпмарĕ.

П о л к о в н и к. Эх, сирĕнпе... *(Салтака.)* Шырас. Вăл инçе кайма пултарайман.

Салтак Митюк пытаннă енне, полковник — тепĕр енне тухса каяççĕ.

1-м ĕ ш х ĕ р а р ă м. Айта, кума, лайăх чух, каяр хăвăртрах, унсăрăн тем курса тăрăпăр. *(Каяççĕ.)*

Митюк каялла йăпшăнса кĕрет.,

М и т ю к. Атте мĕн хушнине чыслă пурнăçларăм. Пуйăсĕ мĕнлерех сирпĕнчĕ! Шел, Петя кураймарĕ. Хăвăртрах хуçăлнă хурăн патне васкас.

Кайма тăрать, анчах салтак персе тухать.

С а л т а к. Стой!

Митюк тепĕр еннелле тарма тăрать, ăна хирĕç полковник тухать. Митюк, ним тăвайман енне, картузне тытса полковник пичĕ çине перет.

П о л к о в н и к *(Митюка пырса тытать)*. Аха-а! Лекрĕн-и? Хальхинче тараймăн, большевик çури. *(Салтака.)* Итле, ку кайăка лашаран вĕренпе кăкарса яр та, сĕтĕрсе çӳресе чунне ил.

С а л т а к. Итлетĕп, господин полковник!

Митюка илсе тухса каяççĕ. Пĕр хушă сцена пушах тăрать. Унтан Павăлпа Петя пĕшкĕнсе кĕреççĕ, иккĕшĕ те салхуллă.

П е т я. Ытлашши ан хуйхăр-ха, Павăл пичче. Митюк вăл тăруках çухалса каймалли ача мар.

П а в ă л. Пĕлетĕп, Петя. Лайăх пĕлетĕп эпĕ хамăн ывăлăма. Анчах мĕншĕн-ха хамăр калаçса татăлнă хуçăлнă хурăн патне халиччен та пымарĕ вăл?

П е т я. Павăл пичче, тен, вăл эпир айккине пăраннă вăхăтра пырса кайнă пулĕ?

П а в ă л. Темшĕн ăш вăркать, Петя.

П е т я. Павăл пичче, мана ямаллаччĕ унпа. Мĕн чухлĕ ӳкĕтлерĕм эпĕ сире, çук итлемерĕр.

П а в ă л. Петя, ун пек çĕре эпĕ сана яма пултарайман.

П е т я. Мĕншĕн?

П а в ă л. Санăн та аçу, аннӳ пур. Эсĕ вĕсен пĕртен-пĕр ывăлĕ.

П е т я. Мĕнех вара?

П а в ă л. Санпа инкек-синкек сиксе тухсан, мĕн каланă пулĕччĕç вĕсем мана?

П е т я. Тав тунисĕр пуçне, урăх нимĕн те каламан пулĕччĕç.

П а в ă л. Эх, Петя, Петя...

П е т я. Мĕнех вара, Павăл пичче, эпĕ вилсен те Тăван çĕршывшăн, Совет влаçĕшĕн вилетĕп-çке.

П а в ă л. Вилĕмпе вылямa юрамасть, ачам.

П е т я. Эпĕ, Павăл пичче, вылямастăп унпа, кĕрешетĕп.

П а в ă л *(Петьăна çурăмĕнчен лăпкаса)*. Матур ача эсĕ, Петя, пĕлетĕп. Анчах ун çинчен кайран калаçăпăр, чĕрĕ юлсан. Мĕнле пек сан шутпа, Митюк шуррисен алли не лекмерĕ-ши?

П е т я. Темле çав, Павăл пичче.

П а в ă л. Малалла каяр-ха.

Павăлпа Петя сценăн тепĕр енне тухса каяççĕ. Часах пĕр хĕрлĕгвардеец аллисене каялла çыхнă Мотьăна тĕксе кĕртет.

Х ĕ р л ĕ г в а р д е е ц. Аранах лекрĕн, вуникĕ пуçла çĕлен. Пĕлĕр, Хĕрлĕ Çар боецĕсем нихçан та хăйсенчен мăшкăллаттармаççĕ.

Мотя ши! шăхăрать, тарма тăрать, ăна хирĕç Павăлпа Петя сиксе тухаççĕ.

Х ĕ р л ĕ г в а р д е е ц *(ерипен)*. Стой! Парăп эпĕ сана тарма.

П а в ă л. Ку кайăка çаклатрăр эппин? Матур!

Хĕрлĕгвардеец. Çапла, командир юлташ. *(Мотьăна.)* Ут! Ирсĕр этем!

Мотьăна илсе тухса каяççĕ. Сцена пĕр хушă пушах, унтан лаша ури сассисем илтĕнсе каяççĕ. Унччен те пулмасть, сцена варрине кĕпе-йĕмĕ чĕркеленсе пĕтнĕ Митюк тайкаланса тухать. Пилĕкĕнче — вĕрен йалли.

Митюк *(аран-аран)*. Ах, пĕтĕм шăм-шака пĕтерчĕç... Анчах çук, çук, мĕнле кăна пулсан та, кунта юлма юрамасть. Пытанас пулать. Анчах мĕнле, ăçта пытанас?.. *(Укет.)* Пĕтернĕ иккен мана, шăм-шак чукмарпа хĕненĕ пекех ыратать... *(Пуçне çĕклесе пăхать.)* Ах, лашине чарчĕ вăл. Эпĕ татăлса юлнине пĕлчĕ иккен. Мĕн тăвас? Хальхинче вĕлеретех вăл мана. Анчах çук, чĕрĕллех, пĕлсе тăнă çĕртенех, тăшман аллинчен вилме тивĕç мар эпĕ! Атте, Петя, ăçта эсир?! Манăн-и, манăн вăй пур-ха... *(Аран-аран упаленсе йывăçсем хушшине кĕрсе каять. Лаша ури сассисем çывхараççĕ.)*

Сасă. Тпр-ру! Стой! *(Юланутçă лаша çинчен сиксе анни илтĕнет.)* Итле, Ваçка, шăпăртах тăр çакăнта. Чĕлпĕрне туртса татнă ан пултăр. *(Лаша кĕçенни илтĕнет, часах шуррисен салтакĕ кĕрет. Хĕçпе.)*

Салтак *(ун-кун пăхкаласа)*. Ай, шуйттан ачи, мĕнле татăлса юлма пултарчĕ-ха вăл? *(Шырать.)* Тепле пулсан та тупасах пулать. Унсăр таврăнсан, хам пуçа касаççĕ. Çук, таçта аякка татăлса юлма пултарайман вăл. *(Курăк çинче йĕр курать.)* Акă ун йĕрри, епле курăка выртттарса пынă. *(Йĕр тăрăх Митюк кайнă çĕрелле тухса каять. Сцена хыçĕнче кăшкăрать.)* Акă ăçта выртатăн иккен эсĕ, антихрист ачи! Ну, халĕ лекмеллипех лекрĕн эсĕ ман алла. *(Сцена варрине сĕтĕрсе тухса пăрахать.)* А ну, кала, мĕнле касрăн эсĕ вĕрене?

Салтак Митюк пилĕкĕнчи вĕрен вĕçне ун пичĕ патнех илсе пырать. Çак самантра Митюк салтак аллине çыртса илет. Лешĕ хăрушла кăшкăрса ярать.

Салтак. Кăтартăп эпĕ сана çыртма. *(Хĕнеме тытăнать.)* Ак сана, ак сана, шуйттан ачи. Çитет кун чухлĕ

муталашнипе, сана пула тем курса тăрăн кунта. Тепĕр хут вĕрене çыхам та, мĕн чуну тухичченех вара... *(Тухса лашаран кăкарнă вĕрене сĕтĕрсе кĕрет. Митюка çыхма пикенсе.)* Текех ĕнтĕ татăлса юлаймăн.

**Çак вăхăтра сцена хыçĕнче пăшалсенчен, пулеметсенчен пени, шавлани, «хĕрлисем çитрĕç!» тесе кăшкăрни илтĕнсе каять. Малтан Франц, унтан полковник чупса кĕреççĕ. Франц Митюк çине пистолетран перет те малалла чупать. Вĕсем хыççăнах Павăлпа хĕрлĕгвардеец чупса кĕреççĕ, полковникпе салтака тыткăна илеççĕ.**

П а в ă л *(хĕрлĕгвардееца)*. Илсе кай кусене, асту, ан вĕçерт! *(Сасартăк çĕрте вилнĕ пек выртакан Митюка курать.)* Митюк? Ывăлăм. Эсĕ-и ку? *(Митюк умне чĕркуçленсе ларать, ăна çĕклесе унăн пуçне хăйĕн чĕркуççийĕ çине хурать.)* Митюк, Митюк! Мĕншĕн чĕнместĕн эсĕ? Сана амантрĕç-и-мĕн?

**Дубовпа Петя чупса кĕрсе иртсе кайма тăраççĕ, Митюкпа ашшĕне курса, вĕсем патне пыраççĕ.**

П е т я. Ой! Митюк тупăннă!

П а в ă л. Шăпрах пул-ха, Петя.

П е т я. Митюк, Митюк, уç куçна. Ку эпĕ — Петя, сан тусу. Куçне уçрĕ, уçрĕ.

М и т ю к. Петя, эсĕ питĕ лайăх тус.

П а в ă л. Ну вăт, Митюк, эпир каллех пĕрле. Часах акă шуррисене аркатса тăкатпăр, вара каллех Тĕрлемесе таврăнатпăр. Ун чух сана пуйăспа Мускава çитиех илсе çӳрĕп. Юрать-и, Митюк? Мĕншĕн чĕнместĕн эсĕ?

М и т ю к. Атте, Дубов командир ăçта?

Д у б о в. Митюк, эпĕ кунтах.

М и т ю к. Командир юлташ, эпĕ сирĕн приказа пурнăçларăм.

Д у б о в. Матур эсĕ, Митюк. Сана Хĕрлĕ Çар командовани ячĕпе тав тăватăп.

М и т ю к. Пирĕннисем час çитеççĕ-и?

Д у б о в. Пирĕннисем, Митюк, çитрĕç. Халĕ пирĕн бронепоезд та, тупăсем те, пулеметсем те нумай.

М и т ю к. Ух, мĕнле лайăх!.. Атте... аннене кала... ан ятлатăр вăл мана. *(Пуçне лăк! ярать. Пурте хыпăнса ӳкеççĕ, картузĕсене хываççĕ.)*

П а в ă л. Митюк, Митюк, ывăлăм...

Çак самантра сцена хыçĕнче ерипен юрлама пуçлаççĕ.

Пĕр каçхине, канма тăрсассăн,
Вăл ячĕ хавас юрласа,
Лексессĕн тăшманăн пульлийĕ
Юрра-çке пăрахрĕ татса.

Елизавета Яковлевна хыпаланса кĕрет. Вăл тӳрех Митюк çине ӳкет.

Е л и з а в е т а Я к о в л е в н а. Митюк, чĕппĕм, эсĕ кунта-çке. *(Митюк вилнине пĕлсен, шариех çухăрса, ĕсĕклесе йĕрсе ярать.)* Митюк! Ман чĕппĕм, вилнĕ-çке эсĕ!..

П а в ă л. Қаçар, амăшĕ, упраймарăм Митюк ывăлăма.

Юрă вăйланать:

Кулса çап-çамрăк парапанçă
Чĕр курăк çине йăванать,
Куç хупрĕ çамрăк парапанçă
Хастар парапан лăпланать.

ЧАРШАВ.

## ЭПИЛОГ

Чаршав хупӑнсанах сцена умне пионерсен аслӑ вожатӑйӗ Широков тухать.

Широков. Паян эпир граждан вӑрҫин ҫамрӑк паттӑрне, хамӑр ялта ҫуралса ӳснӗ Юркин Митюка чыс туса, ун ячӗпе палӑк уҫатпӑр.

Широков чаршав хыҫӗнче юрлакансемпе пӗрле юрлать.

Пӗр каҫхине, канма тӑрсассӑн,
Вал ячӗ хавас юрласа,
Лексессӗн тӑшманӑн пульлийӗ
Юрра-ҫке пӑрахрӗ татса.

Хӗрӳ ҫулсем халь иртсе кайнӑ
Текех ҫӳрес ҫук походра.
Пуҫ хучӗ ҫамрӑк параппанҫӑ,
Ун ячӗ янӑрать юрӑра.

Чаршав ерипен уҫӑлать. Сцена варринче — шурӑ пӳс карнӑ палӑк. Хыҫалта, йывӑҫсем хушшинче, икӗ хутлӑ шкул ҫурчӗ курӑнать. Палӑкӑн икӗ енӗпе пионерсем тӑрса тухнӑ. Кунтах Елизавета Яковлевнӑпа отставкӑри Дубов полковник те пур.

Широков. Дружина совечӗ сӗннипе, палӑк ҫинчи ҫивиттине пиллӗкмӗш класри пӗрремӗш звенон звеньевойӗ Фекла Лаптьева сирет. *(Вожатӑй пионерсен ретне тӑрать.)*

Хӗветле, стройран тухса, палӑк ҫинчи ҫивиттине сирет. Ҫак вӑхӑтра горнпа параппан сасси, алӑ ҫупни янраса тӑрать. Палӑк тӑрринче — ҫӑлтӑр. Варрине, рама ӑшне, Митюк сӑнӳкерчӗкне тата пионерсем

тупнӑ документа вырнаҫтарнӑ, вӗсем айне: «Совет влаҫӗшӗн ҫапӑҫса ҫамрӑклах пуҫне хунӑ Юркин Митюка ӗмӗр мухтав!» тесе ҫырнӑ.

Широков. Юлташсем, 1918 ҫулта Хӗрлӗ Ҫар отрячӗн командирӗ пулнӑ, халӗ отставкӑна тухнӑ Василий Иванович Дубов полковник сӑмах илет.

Палӑк патне, ачасем умне, Дубов тухать. Ҫак хушӑра ачасем пӗрпӗрне: «Вӑл Митюк командирӗ пулнӑ», «Митюк ӑна питӗ юратнӑ, тет», «Пӑхӑр-ха, кӑкӑрӗ ҫинче мӗн чухлӗ орден лентисем», тесе пӑшӑлтатаҫҫӗ.

Дубов. Хаклӑ ачасем, эсир граждӑн вӑрҫинче ҫамрӑк совет ҫӗршывне хӳтӗлесе вилнӗ аслӑ пиччӗре чысласа ҫак палӑка лартни — калама та ҫук пысӑк ӗҫ. Уншӑн эпӗ сире пӗтӗм чӗререн тав тӑватӑп. *(Алӑ ҫупаҫҫӗ.)* Ачасем, граждӑн вӑрҫи ҫулӗсенче пирӗн ҫӗршыв умне мӗнле пысӑк йывӑрлӑхсем тухса тӑнине эсир лайӑх пӗлетӗр. 1918 ҫулта шуррисем Хусан хулине йышӑнчӗҫ, чугун ҫул тӑрӑх Тӗрлемес патнех ҫывхарчӗҫ. Ҫакӑнта сирӗн янташӑр, вунвиҫӗ ҫулхи Митюк, пысӑккисемпе пӗр танах ҫапӑҫрӗ, Хӗрлӗ Ҫар отрячӗсемшӗн, совет ҫӗршывӗшӗн мухтава тивӗҫлӗ паттӑрла ӗҫсем турӗ. Ӑна, манӑн ҫамрӑк тусӑма, эпӗ пуринчен те хытӑ юрататӑп. Вӑл мана вилӗмрен хӑтарса хӑварчӗ. Ӗмӗр мухтав ӑна, тӑван ҫӗршывшӑн ҫамрӑклах пуҫне хунӑ вилӗмсӗр паттӑра! *(Пуртв пуҫӗсене таяҫҫӗ.)* Ҫӑмӑл пултӑр унӑн йывӑр тӑпри. Аслӑ Ленин, Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе, пирӗн мухтавлӑ ҫар, мухтавлӑ совет халӑхӗ ун чух пӗтӗм тӑшмансене хамӑр ҫӗршывран хӑваласа кӑларчӗ. Ҫав кунсен чапӗ нихҫан та ҫухалмӗ!

Халӗ, акӑ, Совет ҫӗршывӗ тӗнчере чи хӑватлӑ ҫӗршыв пулса тӑчӗ. Комсомолецсем, пионерсемпе шкул ачисем, Аслӑ Ленин хушса хӑварнисене, мухтавлӑ Коммунистсен партийӗ кӑтартса пынисене яланах чыслӑн пурнӑҫласа пыма, вилӗмсӗр Митюк пекех, яланах хатӗр пулӑр!

Пурте. Яланах хатӗр!

ЧАРШАВ.

## РЕЖИССЕР СЕНЕВЕСЕМ

«Çав кунсен чапĕ çухалмĕ» пьесăна В. Эльпипе Г. Пласкин авторсем пионерсене, комсомолецсене — пĕтĕм шкул ачисене халалласа çырнă.

Пьесăри ĕçсем Тĕрлемес таврашĕнче пулса иртеççĕ. 1918 çулта шуррисем Хусана тытса илнĕ хыççăн, Шăхран урлă кайса, Мускава çитесшĕн пулнă.

Анчах хĕрлĕгвардеецсем шуррисене çав шухăша пурнăçлама ирĕк паман, вĕсем хăйсен рубежне уйрăмах Тĕрлемес таврашĕнче çирĕп тытса тăнă. Кĕçех хĕрлисен пулăшăвĕ тылран килсе çитнĕ, шуррисене вĕри çатма çинчи пăрçа пек ташлаттарма пуçланă. Шуррисем хушшинче паника пуçланнă, вĕсем Хусан еннелле тарма тытăннă. Çак çапăçусенче шуррисене хирĕç çитĕннисемпе пĕрле ачасем те кĕрешнĕ. Ку пьесăра шăпах çавăн пек ачасен—Митюкпа Петьăн—паттăрла ĕçĕсем çинчен каласа панă. Çак пьесăна тĕплĕ лартас тесен, чи малтан Тĕрлемес çывăхĕнче пулса иртнĕ çапăçусен историне пĕлес пулать. Ана уйрăммăнах И. Е. Ефимовăн «За власть Советов» ятлă кĕнекинче тĕплĕ кăтартса панă. Çак пьесăна ялти драмкружоксенче лартса панă чух ертсе пыраканăн мĕн пĕлмелле-ха?

Чи малтан вылякансен сăнарĕсемпе паллашмалла. Камсем вĕсем? Мĕн тăваççĕ? Мĕнле событисем витĕр тухаççĕ? Вĕсен умĕнче мĕнле задача? Çак ыйтусем çине ответлес тесен, лартаканăн пьеса идеине лайăх пĕлмелле. Мĕн çинчен ку пьеса? Спектакле лартакан режиссер çак пьесăна лартса паянхи çамрăксене мĕн кăтартса парасшăн?

Драмăри прологпа эпилогра хальхи вăхăта кăтартса панă, тăвата пайĕнчи ĕçсем вара 1918 çулта пулса иртеççĕ. Çавăнпа лартаканăн çавăн чухнехи чăвашсен йăлине, вĕсем хăйсене мĕнле тыткаланине тата хальхи вăхăтри çынсем унтанпа мĕн чухлĕ улшăннине те шута илмелле.

Событи тесе мĕне калаççĕ? Ана пĕлни мĕне кирлĕ? Мĕн вăл завязка, кульминаци, развязка, финал, сверхзадача?

## ВЫЛЯКАНСЕНЕ САНАРЛАНИ.

МИТЮК — чухăн çын ачи. Ун çинчен прологра амăшĕ каласа парать. Вăл ашшĕпе поезд çине ларса таçта та çитнĕ, çапла хăюлансах пынă, ăслă та çивĕч, сăмаха шухăшламасăр персе ямасть. Ашшĕпе амăшне питĕ юрататъ, вĕсем мĕн хушнине яланах пурнăçлать. Анчах ăна кукамăшсем патне леçсе ярас тесен, вăл унпа килĕшмест, мĕншĕн тесен вăл хăйне арçын, тет. Вырăс ачи Петя: «Халь шăлавар тăхăннă кашни арçынах алла хĕçпăшал тытса тăшмансемпе кĕрешет»,— тени ун чĕрине çирĕп кĕрсе вырнаçать. Вăл амăшĕнчен ăна пăхăнман пирки мар, вăрçă пынă вăхăтра кукамăшсем патĕнче алла усса ларасран хăраса тухса тарать. Митюк çирĕп тус, Петьăпа кăшт-кашт хирĕçкелесе илен пекки тăваççĕ пулин те, Петяна çав тери юрататъ, мĕншĕн тесен вĕсен иккĕшĕн те пĕр тĕллев — хĕрлисене пулăшасси. Вăл командира питĕ юрататъ. Дубов командир уншăн тĕслĕх пулса тăрать. Дубов вĕсене хăй патне илмесĕр каялла хăваласа ярсан, Митюкпа Петьăн чунĕсем çав тери хуçăлаççĕ, анчах хăйсен ĕмĕтне татмаççĕ.

Сараев связист Дубова шуррисен аллине тытса панине курсан, Митюкпа Петя ăна чунтан кураймй пулаççĕ, Сараева хĕрлисен штабне тытса каяççĕ. Митюк Дубов тыткăна лекнине пĕлсен, нимрен хăрамасăр ăна çăлма вăскать, анчах ача-ачах çав, вăл часах хăй çинчен те манса кайсах Дубова çăлма пикенет, анчах хăй те тăшман аллине лекет. Шуррисен штабĕнче те вăл хăйне паттăр та хăюллă тыткалать, чунтан кураймасть вăл шаклапуç полковнике. Митюк пулăшнипе хĕрлĕгвардеецсем Дубова ирĕке кăлараççĕ. Митюк, хăйĕн ĕçĕ ăнса пынине кура, татах задание яма ыйтать. Акă вăл шуррисен тылĕнче.

Шуррисем хăйсен вилĕмне сиссе каялла тарасшăн, анчах Митюк вĕсен ĕмĕтне татать — взрывчатка хурса шуррисен эшелонне сывлăша сирпĕтет. Митюк пек ачасене халăхра шывра путман, вутра çунман ача, теççĕ. Митюк чăнах та çавăн пек ача, анчах юлашки задание пурнăçланă хыççăн вăл Тăван çĕршывшăн кĕрешсе паттăрсен вилĕмĕпе вилет.

Митюка вылякан «артистăн» çак сăнар малтан пуçласа вĕçне ситиччен мĕнле ӳссе улшăнса пынине кăтартса пама тăрăшмалла. Малтан вăл лăпкăччĕ, амăшне каламасăр вăрçа каясран та тытăнса тăратчĕ (1-мĕш картинăра). «Хăраса мар-ха, а анне вара?» — тетчĕ Петяна хирĕç. Иккĕмĕш пайра вăрçа кĕресшĕн ăшаланса çӳрерĕ, виççĕмĕш пайра пĕр хăрамасăр тăшмана хирĕç тăчĕ, тăваттăмĕш пайра Тăван Çĕршывшăн хăйĕн пуçне шеллемерĕ. Митюк рольне вылянă чух çакна асра тытмалла: вăл ача ăсĕпе ним пĕлмесĕр таçта та кайса пуçне чикекен йышши мар, вăл хăй ĕçне пĕлсе, тĕплĕн шухăшласа тăвать.

ПЕТЯ — Митюкран та хăюллă, мĕншĕн тесен вăл Хусантан килнĕ вырăс ачи. Ӑкă еплерех калаçать вăл вагон çинче шуррисен салтакĕсемпе? «Вăл сирĕн ĕç мар, ăçта сирĕн командир?!» — тет вăл. Тăшмансемпе пит чее. Туса, юлташа нихçан та сутмасть. Вăл Митюка юрататъ, ăна пăшал пеме вĕрентет, вăрçă çинчен каласа парать, çĕнĕ юрă та вĕрентет («Юный барабанщик»). Митюкпа танлаштарсан, унăн кăштах васкас, хыпаланас йăли пур. «Çиччĕ виç те пĕрре кас», тени çук ун. Дубов командир вĕсене хăй патне çапăçăва кĕме ирĕк патăр тесе, вăл хăй чикĕ урлă каçни (II пай) çинчен кăшт мухтанарах каласа парать. Çапла каласа тĕлĕнтерсен, Дубов ăна хăй патне илетех тесе шутлать.

Петьăна вылякан «артистăн» юмор пулсан аванрах. Петя кичем ача мар, сăмаха кĕсъере шыраса тăмасть. Митюк пекех паттăр, çивĕч. Митюкпа Дубов тăшман аллине лексен, пĕр хăраса тăмасăр вĕсене çăлма каять.

Елизавета Яковлевнăпа Павел Юркин пĕр-пĕринпе шăкăлтатса, килĕштерсе пурăнакан мăшăр. Вĕсен пĕртен-пĕр ывăлĕ — Митюк. Пĕр-пĕринчен иртмеççĕ, ĕçе сыпăçуллă та тĕплĕ тăвакан çынсем. Питĕ тĕрĕс те уçă кăмăллă, нихçан çынна улталаман вĕсем, пĕр-пĕринчен те ним пытарман. Питĕ телейлĕ мăшăр ку. Упăшки хăй ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çар отрядне çыръăннă тенине илтсен, «Эпĕ те санран юлмастăп», тет. Çак вырăна режиссерăн тĕрĕс ăнланмалла. Елизавета Яковлевна упăшкинчен таталса юласран хăранă пек ан пулса тухтăр. Вăл больницăра ĕçленĕ çын, «хĕрсе вăрçă пынă чух алла усса ларасран» хăрать. Аманнă салтаксене пирвайхи пулăшу панă çĕрте усăллă пуласшăн. Ку вăл — патриотла туйăм.

Митюк, Петя, Елизавета Яковлевна, Павăл — чăн-чăн патриотсем, çак сăнарсем урлă эпир чăн-чăн совет çыннисен сăнарĕсене курмалла.

Елизавета Яковлевна та арçынсемпе пĕр тан вутлă çумăр витĕр пĕр хăрамасăр тухать. Митюк тухса тарни ун ăшне çунтарать. «Ман Митюк та çапла таçта аманса выртрĕ пуль», тет. Аманнисене ывăлне шелленĕ пекех шеллет.

ДУБОВ — хĕрлисен командирĕ, ăна пурте юратаççĕ, хăйĕн связисчĕ çеç, хисеплесе тăнă çĕртех, юрату ытамне кĕрсе ӳксе, Дубова шуррисене сутать. Дубов ĕçре пултаруллă, çапăçура çивĕч те паттăр, хăйĕн салтакĕсене юрататъ. Петьăпа Митюк ăна ĕçтерме шыв илсе пырсан, тӳрех ĕçмест, «шуррисем наркăмăшлă шыв парса ямарĕç-ши?», тет. Ку вăл асăрхануллă çын пулнине кăтартать. Ачасене питĕ юратать, çавăнпа вĕсем инкеке лекесрен хăраса Митюксем патне кайма хушать. Митюкпа Петя чăн-чăнах маттур ачасем иккенне ăнланса илсен, вĕсемшĕн тем тума та хатĕр.

Дубова вылякан çын çӳллĕ те яштак, кĕрнеклĕ пулмалла, вара унпа юнашар тăнă чух Митюкпа Петя татах пĕчĕкрех курăнаççĕ — ачасем пĕчĕкрех курăнни аван. Дубов — чăн-чăн паттăр. Унра чăн-чăн совет çыннин сăнарĕ пулмалла.

САРАЕВ — çепĕç кăмăллă, çын сăмахне ĕненекен çын. Хитрене юратса, хăй командирне сутать. Сараев — хăйшĕн пурăнать, пуяна хапсăнать, çавна пула хăйĕн пуçне çиет.

Сараева вылякан «артистăн» аманнă хыççăн (2-мĕш пайĕ) «Мĕн туса хутăм! Эх, ухмах, ухмах!» тенĕ вырăна уйрăмах пусса каламалла.

МОТЯ, шуррисен полковникĕ, Франц — чех çынни, часовой — шуррисен салтакĕ тата ытти шуррисен çыннисене вылянă чух пит камитленме кирлĕ мар, урăхла каласан — вĕсем те çынсемех. Анчах вĕсен пурнăç тĕллевĕ пачах урăхла. Ялти драмкружоксенче спектакльре выляканcем юри кулăшла туса кăтартма хăтланаççĕ, ку пачах та тĕрĕс мар. Калăпăр, шуррисен полковникĕ чăн-чăн туйăмпа çирĕп вылямасан, тăшман ытла ухмах та вăйсăр пулса тухать. Çакна асра тытмалла: тăшман вăйлă та чее. Çавăнпа вĕсемпе вăйлă кĕрешмелле. Тăшман çапăçусăр парăнмасть.

Событисем тесе картинăра тĕп вырăн йышăнакан сăлтавсене калаççĕ. Сăмахран, çак пьесăра мĕнле-мĕнле событисем пур-ха? Прологра — ачасем документ тупнă. Ку событие «документ» тесе ят памя пулать.

Пĕрремĕш пайĕнче мĕнле событисем?

Вăрçă пуçланнă! Ашшĕ те (Павăл), амăшĕ те (Елизавета Яковлевна), Митюкпа Петя та пурте вăрçă çывхарса килнине сиссе хыпăнса ӳкеççĕ. Вăрçă пуçланнă тени — пурнишĕн те тĕнчере хăрушă хыпар. Событие пĕлни выляканcене тĕрĕс ритма кĕртет. 2-мĕш пайĕнче ачасемшĕн (Митюкпа Петьăшăн) икĕ событи:

1-мĕш. Шуррисем наступлени пуçлани.

2-мĕш. Сараев Дубова шуррисен аллине тытса пани. Пьеса сюжечĕ енĕпе çеç пăхсан — кунта пĕр пысăк событи: Сараев — предатель. Митюкпа Петя пĕрремĕш событинче мĕн тăваççĕ? Шурри-

сем наступлеңи пуҫласан, хĕрлисем шуррисене аркатса тăкнă вăхăтра ҫак ҫапăҫăва вĕсем хутшăнайманни ытла та кӳрентерет вĕсене. Ахаль мар Петя: «Эпĕ аннерен вăрҫă хирĕнче ĕҫсĕр ҫӳресшĕн тарса килмен», тет. Вилес пек ҫапăҫăва каясшăн!

3-мĕш пайĕнче мĕнле событи?

Дубов — пленра. Хĕрлисен пур персонажĕсем те Дубова ирĕке кăларас ĕҫе хутшăнмалла.

4-мĕш пайĕнче — пур персонаж валли те икĕ событи.

1) шуррисем хушшинче паника пуҫланни, 2) хĕрлисен пулăшăвĕ бронепоездпах килсе ҫитни. Кунта малтанхи событийĕ иккĕмĕшĕнчен тухса тăрать. Ҫак икĕ событие пайласан, динамичность ӳссе пырать: ритм хăпарать, выляма ҫăмăлрах пулать.

Финал — Митюк вилни, хĕрлисем ҫĕнтерни.

Эпилогра — Митюка асăнса паянхи пионерсемпе шкул ачисем палăк лартаҫҫĕ.

Завязка, кульминаци, развязка, финал — ҫаксене пĕлсе тĕрĕс йĕркелесе пыни режиссера тата тин ҫеҫ пьесăсем ҫырма вĕренекен ҫынсене питĕ кирлĕ.

«Ҫав кунсен чапĕ ҫухалмĕ!» пьесăра завязка прологранах пуҫланать теме юрать — документ тупнинчен. Анчах вăл интереслĕ мар. Чăн завязка — Митюкпа Петя вăрҫа тухса тарнинчен пуҫланать.

Кульминаци — Мотя Сараев пуҫне ҫавăрса вăл пулăшнипе Дубова тытса кайнă вăхăтра пулать. Развязка — хĕрлисем тылран пулăшу килсе ҫитессе кĕтни. Ҫав майпа шуррисене каялла Хусана тарса ӳкме памалла мар.

Развязкăн вăйĕ — Митюк шуррисен эшелонĕ патне йăпшăнса пырса поезд кустăрмипе рельс хушшине взрывчатка хуни, эшелон сывлăша сирпĕнни.

Финал — хĕрлисем ҫĕнтерни.

Сверхзадача. Кашни событиех задачăран тăрать, кашни персонажăн задачи, кашни предложенинче те хăйне евĕрлĕ задача пур.

Сверхзадача тесе пьесăн идеипе пĕрлешсе тăракан режиссерăн тĕп шухăшне калаҫҫĕ. Урăхла каласан, «Ҫав кунсен чапĕ ҫухалмĕ» пьесăна лартса режиссер паянхи куракана мĕн кăтартса парасшăн? Авторăн идеи: Тăван Ҫĕршыва упраса пурăнассишĕн кĕрешсе паттăрла вилнĕ Митюк пек ҫынсен ячĕсене халăх чысласа пурăнать. Режиссер вара ун ҫумне хăй шухăшне хушать: Паян куна пирĕн ҫĕршыв капиталистла патшалăхсемпе чикĕленсе тăрать-ха. Пирĕн яланах сыхлă та ҫирĕп тăмалла.

«Комсомолецсем, пионерсемпе шкул ачисем, тăван ҫĕршывшăн кирлĕ пулсан, эсир те вилĕмсĕр Митюк пекех паттăр та хăюллă пулăр!

Аслă Ленин хушса хăварнисене, мухтавлă Коммунистсен пар-

тийĕ хушнине числăн пурнăçласа пыма яланах хатĕр пулăр!» — тесе калани пьесăн сверхзадачи пулать.

**Костюмсем.**

Митюк — чăваш пир кĕпипе, лапрашки пирĕнчен çĕленĕ шăлаварпа, çăпатапа. Пуçне ашшĕн кивелнĕ картузне тăхăннă.

Петя — малтан, Митюксем патне кĕнĕ чух — типтерлĕ тăхăннă. Вырăс çипуçĕпе. Хура сатин кĕпепе, умĕнче шурă тӳмесем, чĕн пиçиххипе, пушмакпа, пĕчĕкрех курăнас тесен, чувякипе те юрать.

1-мĕш пайĕнче тухса тарнă чух Митюк хăй çипуçне — япăххисене парать ăна. Кун пирки 2-мĕш пайĕнче Петя: «Ку çипуçа мана Митюк пачĕ, апла-капла сиксе тухсан, эпир — ыйткалакансем», тет Дубов командирпа калаçнă чух.

Петьăн наган пур, вăрçă хирĕнче Митюкăн та наган пур.

Елизавета Яковлевна 1-мĕш картинăра — ялти чăваш çипуçĕпе, кайран — вăрçăра — шурă халат тăхăннă, пуçĕнче санитарка тутăрĕ, çамки çинче хĕрлĕ хĕрес, аллинче хĕрлĕ хĕреслĕ сумка, унта медикаментсем. Урара чувяки е кивĕрех туфли.

Павăл Юркин — железнодорожник çипуçĕпе — вăрçăра та унпах юрать. Вăл вăхăтра çар костюмĕсем çителĕклĕ пулман, кам мĕн тăхăннă, çавăнпах вăрçнă. Уринче кивĕ атă.

Дубов — сăран пиншакпа, картузпа, атăпа, чĕн пиçиххипе, портупея-комбурăпа.

Прологпа эпилогра выляканcем паянхи шкул ачисем, вожатăй, учительсем.

1-мĕшпе 2-мĕш хĕрарăмсем — ялти çипуçпа.

Шуррисен салтакĕсем — шуррисен çар çипуçĕпе. Полковникпе Францăн эполетсем пулма пултараççĕ тата ытти çар çипуçĕн эрешĕсем — цепочка т. ыт. ылтăн тĕслĕ йăлтăртатса тăракан тӳмесем.

Часовойăн рядовой отличиллĕ погон, кĕске кăсăруклă картуз.

**Декораци.**

Декорацие пит кăткăс тума кирлĕ мар. Прологра — шкулти пĕр пӳлĕм, сĕтелпе виç-тăватă пукан, лозунгсем.

I-мĕш картинăра — чăваш пӳрчĕ, унта ытлашши нимех те çук.

II-мĕш пайĕнче хыçала задник çакмалла. Ун çине вăрман ӳкернĕ. Сцена варрине ик-виçĕ тĕмĕ лартма пулать.

III-мĕш пайĕнче шуррисен штабĕ, шалти пӳлĕм вырăнне (шуррисен ларăвĕ) витĕр курăнакан занавес çакса, шалти пӳлĕм пек тума пулать. Занавес витĕр калаçса ларнисем илтĕнччĕр, мĕлкисем курăнччăр. Умĕнче часовой пăшалпа тăрать.

Пĕр енче чӳрече, тепĕр енче — алăк.

IV-мĕш картинăра пĕр задникпех майлашма пулать. Задник

ҫинче чугун ҫул ӳкернĕ, аякра вăрман курăнать. Сцена варринче тĕмескесем пулсан аванрах.

## ПАРИКСЕМПЕ ГРИМ ПИРКИ

Парик пĕр шуррисен полковникне ҫеҫ тăхăнтартмалла, ҫап-ҫара пуҫ, мăйăх, сухал.

Франц — мăйăхпа, вăл чех ҫынни, сухалсăр, чипер яштак арҫын.

Павăлăн кăшт мăйăхпа пĕчĕк сухал пур, хырăннă пулсан та юрать, сухалсăрах. Вăрҫăра хуралса пĕтнĕ пит-куҫлă. Дубов хырăннă, кăшт кăна хурарах сухал вырăнĕ курăнма пултарать.

**З. ЯРДЫКОВА,**
республикăри ача-пăча театрĕн главнăй режиссерĕ.

**ВАЛЕНТИНА АНДРЕЕВНА АНДРЕЕВА—ЭЛЬБИ**
**ГЕННАДИЙ АЛЕКСАНДРОВИЧ ПЛАСКИН**

**ЭТИХ ДНЕЙ НЕ СМОЛКНЕТ СЛАВА**

*Драма*

На чувашском языке

Оформление *В. Ф. Солодовникова*

Редактор *В. Г. Игнатьев.* Технический редактор *Г. П. Петров.*
Художественный редактор *Н. С. Кириллов.* Корректор *Н. Д. Деонидов.*

НТ 00980. Сдано в набор 18/VIII-1960 г. Подписано к печати 9/XII-1960 г.
Формат 84×108/32. Объем в печ. л. 3,075. в уч.-изд. л. 2,503. Заказ № 1501
изд. № 180. Тираж 2500 экз. Цена 12 коп.

**Типография № 1 Министерства культуры Чуваш. АССР**

*гор. Чебоксары, Володарского, 5.*

ЧАВАШГИЗ ЮЛАШКИ КУНСЕНЧЕ АЧА-ПАЧА ВАЛЛИ ÇАК КĔНЕКЕСЕНЕ ПИЧЕТЛЕСЕ КАЛАРЧĔ:

А. Александров — «Пирĕн лагерь». Повесть.
М. Горький — «Ача-пăча калавĕсем».
К. Кунин — «Виçĕ тинĕс леш енне». Повесть.
В. Игнатьев — «Пĕчĕк çулçӳревçĕ». Повесть.
Коллектив — «Пирĕн кĕнеке». Калавсем, сăвăсем, пьесăсем.
М. Ясинский — «Ача-пăча пьесисем».

Çак кĕнекесене пур кĕнеке магазинĕсемпе Союзпечать уйрăмĕсенче те туянма пулать.